# Çулталăк пуçланнăранпа 750 /!/ ÿсĕр водителе тытса чарнă. Çын пурнăçĕ хакран тухрĕ-шим?.. • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

9(879) №, 2015, март/пуш, 14

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



• Сцена суяна юратмасть. 2 стр.
• Шкулта – чăвашла, килте – вырăсла. 3 стр.
• Йывăр чирлĕ ачасене – ятарлă сиплев. 5 стр.
• Арăм сивĕнчĕ, еркĕн пăрахрĕ... 9 стр.


ÇĂЛТĂР ÇŸПÇИ

## Çĕршыв мар, хамăр айăплă



Дмитрий ПЕТРОВ, артист

Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, паян актер, журналист укçи-тенкипе выçă вилетĕн. Пурăнмалли çуртйĕре лайăхлатасси, пĕрпĕр кĕтес туянасси çинчен шухăшламалли те çук. Çавăнпа та кану кунĕсем пирки пачах манса кайса темиçе çĕрте вăй хума тивет. Тумла пĕрмай тумласа тăрсан чула та шăтарать теççĕ, эпир вара лейка пек унталла-кунталла пĕрĕхетпĕр. Ывăл çуралсанах пачах канмасăр ĕçлеттĕм. Çĕрле таксистра тăрăшаттăм, кайран студентсем патне чупаттăм, вĕсем патĕнчен – театра. Пушă вăхăт тупăнсанах тепĕр ĕçе васкаттăм.

Пĕррехинче çапла Лапсар енчен çил пек вĕçтерсе килетĕп. Мана студентсем кĕтеççĕ, ĕлкĕрмеллех. Çав хăрушă ÿкерчĕк халь те куç умĕнче, чутах çапăнса вилмерĕм. Института вăхăтра çитрĕм, чĕтрени, пăлханни иртсе кайсах та пĕтменччĕ пуль, çапах нимĕн те палăртмарăм. Заняти вĕçленсенех директор патне кĕрсе ĕçрен кайма ыйту çыртăм. Пурнăç нимрен хаклăраххине çавăн чухне ăнланса илтĕм те.

Хулари шкулсене спектакльсемпе час-часах тухса çÿретпĕр. Хăш-пĕр çĕрте тĕрлĕрен паллах. Хăш-пĕр шкулта пачах та спектакль курма пĕлмеççĕ, шавлаççĕ, телефонĕсене алăран ямаççĕ. Çывăх çыннисем çак ачасемпе театра нихăçан та ура ярса пусманни тÿрех сисĕнет.

Ашшĕ-амăшĕ юлашки вăхăтра ачисемпе питĕ сахал калаçать. Ирхине пĕчĕккисене çавăтса садике, шкула чупаççĕ. Каçхине ĕçрен таврăнаççĕ те пĕри компьютер, тепри телевизор умне вырнаçса ларать. Ывăл-хĕрĕ планшетпа е телефонпа вылять. Пĕрин те калаçма вăхăт çук. Эрнен кашни кунĕ çапла иртет.

Эпĕ хамăн ывăла шашка-шахматла, доминолла выляттарма тăрăшатăп. Манпа, амăшĕпе те ăмăртмалла пазл пуçтарать.

«Ботаника сачĕ» чарăнуран ытла аякрах пурăнмастпăр. Çемьепе çак тăрăхри пĕчĕк вăрманта – Юманлăх ращинче – уçăлса çÿреме кăмăллатпăр. Юр ирĕлсе пынă май мĕн кăна куç тĕлне пулмасть-ши? Кашни утăмра – эрех-сăра кĕленчи, пластик савăтсапа... Хамăра пăртак та хисеплеме пĕлместпĕр çав, вараланăпăр, аркататпăр, кайран айăплине шыратпăр. Аякран килсе мар, çак тăрăхра пурăнакансемех вăрмана çÿп-çап айне тăваççĕ. Юманлăхра канса ларма нумай пулмасть хитре саксем вырнаçтарса тухрĕç. Тĕлĕнмелле çынсенчен – çавсем çинче шашлăк ăшалаççĕ. «Пĕттĕр, вантăр, манăн мар-иç», – теме юратать пирĕн халăх. «Ют çĕршывра апла мар та капла мар, унта хитре, таса, тирпейлĕ», – тесе мăкăртатнине пĕрре мар илтнĕ. Çĕршывĕнчен мар, йăлтах хамăртан килни пирки шухăшламастпăр та.

Шел те, подъездра та тарăхмалли тупăнсах тăрать. Е сутă сÿнтереççĕ, сăрине ĕçсе янă хыççăн кĕленчине çапса çĕмĕреççĕ. Кайран тирпейлĕхĕн çавна мĕнле тасатмалла-ши? Общежитире пĕрмай шавлани, эрех ĕçни, пирус тĕтĕмĕ йăсăрланса тăни йăлăхтарсах çитерчĕ. Хваттер туянса хăçан тухса тарăпăр-ши?



# Тăван пекех хаклă хаçат

**Шупашкар районĕнчи Апаш ял тăрăхĕнчи Марина Голованова почтальона ватти-вĕтти таранах лайăх паллать. «Хăй те, хĕрĕсем те пăрчăкан пекех, урамра çил-тăман алхасать-и, чашлаттарса çумăр çăвать-и е шăрăх-и, калама çук правурскерсем хаçата кирек хăçан та вăхăтра валеçеççĕ. Почта ещĕкне шанмасăр тепĕр чухне картишне кĕрсе алăкран хĕстерсе е крыльца çине хурса хăвараççĕ», – тет ял-йыш.**

Марина Валерьевна почтальонра 16 çул тăрăшать. Хаçат валеçнисĕр пуçне ял çыннисен ытти чылай ыйтăвне тивĕçтерет. Унсăр пуçне Апаш вăтам шкулĕн библиотекинче те ĕçлет. Килтен ирех тухса кайса каç енне çеç таврăнаканскер кил-тĕрĕшри ĕçсене те тума ĕлкĕрет. Аслă хĕрĕ Женя И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ химипе фармацевтика факультетĕнче вĕренет, иккĕмĕшĕ И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче ют чĕлхе факультетĕнче пĕлÿ пухать. 8-мĕш класра вĕренекен Настя та аппăшĕсем пекех питĕ тăрăшуллă.

– «Чăваш хĕрарăмĕ» тăван пекех хаклă маншăн. Чылайранпа пĕр сиктерми çырăнса илнĕрен хаçата кун çути кăтартакансене пурне те пĕлсе тăратăп, статйисене юратса вулатăп. Шăматкун маншăн – чăн-чăн уяв. Почтальона çак кун чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Тунсăхласан киввисене те уçса вулатăп, эпĕ вĕсене пăрахма хăяймастăп, – чунне уçать Апашри ача садĕнче воспитательте тăрăшакан Лидия Матросова.

Иртнĕ çул Марина Валерьевна ку тăрăхри 22 çынна пирĕн кăларăмпа туслаштарнă. Кăçал та çырăнтару ăнăçлă пуласса шанать.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕ.

**Аса илтеретпĕр, «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата çитес çур çуллăха хальлĕхе йÿнĕ хакпа çырăнтараççĕ: 340,44 тенкĕ.**

АСТĂВĂМ

# Сцена çинче суйнине чăтма пултарайман



**К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн ĕçченĕсем астăвăм касĕ йĕркелени – çирĕпленнĕ пулăм. Пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче РСФСР, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш халăх артисчĕ, К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Леонид Родионов çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Черетлĕ тĕлпулăва сцена ăстисем ăна халалларĕç.**

**Леонид Никанорович – Самар облаçĕнчен. Вăл профессионал чăваш режиссерĕсенчен пĕри пулнă, 10 ытла пьеса çырнă, 5 кĕнеке пичетлесе кăларнă. Юбиляр çавнашкалах классика драматургине сцена çинче кăтартнипе палăрса юлнă. Унăн «Отелло» /В.Шекспир/, «Ревизор» /Н.Гоголь/, «Айăпсăр айăплисем», «Вăрман» /А.Островский/, Мещансем», «Старик» /М.Горький/, «Тĕттĕмлĕх тытăмĕ» Л.Толстой/, «Хĕн-хур айĕнче» /Çемен Элкер/, «Нарспи» /К.Иванов/, «Октябрь хумĕ» /А.Кăлкан/, «Уçнă çерем» /М.Шолохов/, «Уйăх тулнă каç», «Айкуль çĕршывĕ» /М.Карим/, «Манăн хĕрлĕ тутăрлă тополь» /Ч.Айтматов/... спектаклĕсене куракансем çав тери ăшшăн йышăннă.**

СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев Леонид Никанорович хăйĕн ĕçне парăннă, пултаруллă, ĕçчен çын пулнине палăртрĕ. Унăн витĕмĕпе театр çирĕпленсе аталаннă. Вăл тăван тăрăха тăтăш кайса çӳренине аса илчĕ Валерий Николаевич. Халĕ, шел те, артистсен йышĕнче республика тулашĕнчен килнисем çук.

СССР халăх артистки Вера Кузьмина Леонид Родионов çинчен никамран лайăх пĕлет. Вăл унпа нумай çул пĕрле ĕçленĕ. Хăйĕн сăмахне 1947 çулта Мускавран вĕренсе килнинчен пуçларĕ ят-сума тивĕçнĕ хĕрарăм. Дипломлă çамрăксем ун чухне, фойере сумлă артистсемпе паллашнă вăхăтра, чăваш çĕрне пăхăнтарма, Шупашкара тыткăнлама тĕллев тытнине пытармарĕ вăл. Анчах çĕршывăн тĕп хулинче пĕлӳ илни чăн артист пулса çитнине пĕлтермест вĕт. «5 çул массовкăра чупса çӳренĕ хыççăн тин пĕчĕк сăнарсем шанса пама пуçларĕç. Кайран тĕп сăнарсем калăплама пуçларăм. Унпа ĕçлеме питĕ интереслĕччĕ. «Пурнăçри пек марçке. Эс ан выля», – пĕрмай çапла калатчĕ», – йăл кулăпа çичĕ унăн сăн-пичĕ.

Леонид Никанорович ялĕнчен инçех мар сарăлса выртакан 2 кӳлĕпе çыхăннă пăтăрмах çинчен каласа кăтартрĕ вăл. Пĕринче – сивĕ, теприне ăшă шыв пулнă. Артистсем çакăнта канма кайнă. Вĕсене, спектакльте выляканесене, паллах, сиввинче ишме хушман. Хăшĕ-пĕри пурпĕрех иккĕшне те кĕрсе тухнă. Кайран вара... сасси çĕтнĕ. Апла пулин те спектакль кăтартмасăр килмен.

«Сумлă сăнарсем шанса панăшăн Леонид Никановорича тав тăватăп, ун умĕнче пуç таятăп. Вăл тĕплĕ ĕçлетчĕ. Сцена çинче суйнине чăтма пултараймастчĕ. Хăйне килĕшмесен тӳрех чаратчĕ. «Çĕнĕрен», – тетчĕ. Вăл мана ура çине тăма пулăшрĕ. Ун патĕнче пултарулăха туптанăшăн хама телейлĕ тесе шухăшлатăп», – çирĕплетрĕ Вера Кузьминична.

Раççей халăх артисчĕ Николай Григорьев сцена çинче вылянисĕр пуçне театр директорĕнче 20 çул тăрăшнă. «Хушма пĕлӳ илсе ĕçлеме пуçланăччĕ кăна, Леонид Никанорович чĕнсе илчĕ мана. Çамрăк Ленин сăнарне калăплама сĕнчĕ. Ун чухне пирĕншĕн вăл турă вырăнĕнче пулнă. Мĕн калăн? Шанса параççĕ тăк хирĕçлеймĕн – ĕçлемелле. Ăна та, кăна та вулатăп, пурте вĕрентеççĕ, анчах вырăнтан тапранма йывăртарахчĕ», – пăлханса калаçать Николай Данилович. Мускав комиссийĕ темиçе хут – сăнар çирĕплетме, спектакль хаклама – килсе кайни хăех асран тухмĕ. Шăпах «Хумсем çырана çапаççĕ» /Н.Терентьев/ ĕç К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх премине тивĕçнĕ. Чăваш театрĕшĕн пысăк çитĕнӳ, саванăç пулнă ку.

«Леонид Никанорович маншăн – театр çулне тупма пулăшнă çын. Унпа калаçман тăк çакăнта ĕçлеме мар, курма кăна килнĕ пулăттăм. Çакăн пек пулса тухрĕ: яла артистсем спектакльпе килсе тухрĕç. Леонид Никаноровичпа тепĕр темиçе çын пирĕн пата чăх йăтса пычĕç, пĕçерсе пама ыйтрĕç. Ун чухне вăл малти пӳрте кĕрсе мана сывлăх сунчĕ, шкул хыççăн ăçта вĕренме каяссипе кăсăкланчĕ. Çав вăхăтрах сăвă калас, юрлас, сăнар калăплас ăсталăха тĕрĕслерĕ. Унтан çак çулах Мускава артиста вĕренме каймашкăн сĕнчĕ. Хам çула тухасшăнччĕ – килтисем ямарĕç. Çу иртсен колхозра ĕçлеме пуçларăм. Пĕр кун пирĕн пата клуб ĕçченĕ чупса çитрĕ. Артист пулас ĕмĕтлисене Шупашкара тепĕр хут чĕнекен пĕлтерӳ курнă вăл», – çĕкленӳллĕ кăмăлпа сăмахлать Раççей халăх артистки Нина Григорьева. Çакăн хыççăн хĕр республикăн тĕп хулине вĕçтерсе çитнĕ. «Автобусран анса кăшт утсан кĕтмен-туман çĕртен Леонид Никанорович куртăм. Ун чухне унăн ятне-шывне пĕлмен. Вăл кусран çухаличчен «эй!» кăшкăрса хыçран чупрăм. Мана палласа илчĕ. Кайран вĕренме кĕме пулăшрĕ», – тăсăлать калаçу.

Нина Ильинична куракан кăмăлне нумай сăнарпа тупнă. 15-ри Айкуле, тĕслĕхрен, 35 урлă каçсан вылянă. Ку ĕçе пьеса авторĕ Муса Карим та ырланă.

«Нарспие нумайăшĕ вылянă, анчах сана çитекенни пулман», – тенĕччĕ Нина Григорьевăн юбилей касĕнче Валерий Николаевич. Ку спектакле театр ĕçченĕсем хамăр республикăра кăна мар, Мускавра, Питĕрте, чăвашсем пурăнакан ытти тăрăхра кăтартнă. Яланах тулли зал пуçтарăннă. Ку сăнара та аса илчĕ артистка. Нарспи рольне йышăнасшăнах пулман вăл. Пĕрремĕшĕнчен, ун чухне Сетнер савнийĕн çулĕнчен иртнĕ. Иккĕмĕшĕнчен, Нарспие пурте пĕлнĕ, çавăнпах ăна сцена çинче кăтартасси пушшех шухăшлаттарнă.

Çак сăнара халăх патне çитерме пулăшнăшăн Нина Ильинична Леонид Родионова тав тăвать. Ку спектакль режиссерăн юратнă ĕçĕсенчен пĕри пулнă.

«Ырă кăмăлласчĕ, пурнăç çинчен калаçма юрататчĕ вăл. Пĕрре урамра тĕл пулсан манпа Константин Иванов пирки сăмах пуçарчĕ. «Нарспи» поэмăн сыпăкне вулама ыйтрĕ», – сăмах илчĕ Сетнере вылянă Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Семенов.

Раççей халăх артисткине Нина Яковлевăна режиссер «Хумсем çырана çапаççĕ» спектакльте Иван Яковлевăн мăшăрне Екатерина Алексеевнăна выляма шаннă. Çакăншăн Геннадий Волков хăйĕн статйинче артисткăна мухтаса та илнĕ. «Кун пек сăнара Нина Яковлева çеç кăтартма пултарнă», – çырнă унта. Çакă уншăн, хăй калашле, пыл сĕрнĕ пекех пулнă.

«Нарспи» ĕçре Сетнер амăшне калăпланă вăл. Ку та – Нина Михайловнăн юратнă сăнарĕсенчен пĕри. «Пирĕншĕн Леонид Никанорович атте вырăнĕнче пулнă», – терĕ артистка. Унтан режиссерăн мăшăрĕ Наталия Афанасьевна çинчен каласа кăтартрĕ. Вăл çамрăк чухне учительте тăрăшнă. Хĕрарăм хăйĕн пурнăçне упăшкине халалланă. Ахальтен мар çакăнта пуçтарăннисем Леонид Родионов киле те, ĕçе те васканине палăртса хăварчĕç.

«Тĕлĕнмелле ăслăччĕ, ăпăккăччĕ, пултаруллăччĕ вăл», – терĕ ун пирки Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев. Вĕсем мăшăрпа пĕрле вăрмана çӳреме юратнă. Кăмпа, çырла, майăр татнă. Кайран вăрман пуянлăхне пĕрле тирпейленĕ.

«Леонид Никанорович ĕçе çуран çӳретчĕ. Эпĕ те унран тĕслĕх илсе утларах утма тăрăшатăп», – терĕ сăвăç. Çавнашкалах писательсен пĕрлĕхĕнче драматурги урăмĕн ĕçне йĕркелесе пыма пулăшнă вăл.

«Хыпар» хаçат редакторĕнче вăй хунă Демьян Семенов Леонид Родионовран 2 хут интервью илнĕ. Пĕрре хаçатра театр çинчен критика статйи пичетленсен режиссер кӳреннине те манман вăл. Ăна Ефим Никитин шăрçаланă иккен. Çавăншăн калаçмасăр та пурăннă. Кайран пурпĕрех иккĕшĕ пĕр чĕлхе тупнă.

Ĕçтешĕсем Леонид Никанорович çĕр ĕçне юратни çинчен каласа кăтартрĕç. Артистсене те дача туянма сĕннĕ вăл.

Унăн ывăлĕ Виталий Родионов асăну касне Мускавран ятарласах килнĕ. Вăл та ашшĕ театр ĕçне чунран хисепленине аса илчĕ. Унăн юлташĕсене хăйĕн ачисем пекех юратнине палăртрĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ЫЙТĂМ

## Халăх театра çӳрет-и, спектакль пăхма юратать-и?

**Зоя ВАСИЛЬЕВА, 60 çулта:**

– Эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех шкулта ĕçленĕ. Ачасене класĕпех ялтан Шупашкара театра илсе килеттĕмĕр. Кайран спектакльти ĕç-пуçа пĕрле сӳтсе яваттăмăр. Колхоз ĕçченĕсем те ушкăнпа пуçтарăнса билетсем туянатчĕç. Çавăнпах хамăра культура пурнăçĕнчен аякра тăнă теме сăлтав çук. Халĕ те хĕрĕмпе ывăл патне хулана хăнана килсессĕн театрах чун туртать. Ачасем премьерăна каймашкăн билет парнелени те – савăнăç. Халĕ кăтартакан чăваш спектаклĕсенчен нумайăшне курнă. Архиврисемпе те паллашас килет. Вĕсене «сенкер экранпа» тăтăшрах кăтартсан тем пекехчĕ.

Чăваш академи драма театрĕн «Мунча кунĕ» спектаклĕ аса килчĕ. Унта, чăнах, паянхи пурнăçа кăтартнă: çамрăксем хулара тĕпленеççĕ, ватăсем тăр пĕччен юлаççĕ.

**Анатолий СИДОРОВ, 62 çулта:**

– Шупашкар артисчĕсене ялта кĕтетпĕр. Çĕнĕ спектаклĕсене кашни тăрăхах çитсе кăтартчăр. Драма-и, камит-и – курăпăр, хак парăпăр.

**Валентина ФЕДОРОВА, 63 çулта:**

– Çулталăк каялла Вырăс драма театрĕнче пулнăччĕ. Хĕрĕме ĕçĕнче йыхрав хучĕ панă та – мана та пĕрле илсе кайрĕ. Ĕç хыççăн ывăнтарать, ниçта та тухса çӳрес килмест. Ялта çурт тума пикеннĕ те, эрне вĕçĕнче тăван тăрăха вĕçтеретпĕр.

**Надежда СМИРНОВА, 38 çулта:**

– Эпир çемйипех театра юрататпăр. Ывăл та, хĕр те чăвашла лайăх пĕлеççĕ. Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче эпир курман спектакль юлманпа пĕрех. Юлашки хут унта икĕ уйăх каялла пултăмăр, «Чикагори кукаçин пурлăхĕ» спектакле иккĕмĕш хут куртăмăр.

Шкулта акăлчан чĕлхин учителĕнче ĕçлетĕп, хамăн класри ачасемпе те час-часах театра тухса çӳретĕп. Нумай пулмасть Оперăпа балет театрĕнче «Алые паруса» юмах курса килентĕмĕр. Питĕ килĕшрĕ. Мăшăра та, ывăлпа хĕре те пĕрле илсе кайрăм. Пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче «Тысяча и одна ночь» спектакль курма каясшăн.

**Владимир ОСИПОВ, 46 çулта:**

– Чăваш театрĕнче юлашки хут тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне пулнă. Ялтан автобуспа ятарласа хула курма илсе килнĕччĕ. Каçхине театра кайрăмăр. Мĕнле спектакль курнине астумастăп. Эпĕ кино курма кăна юрататăп.

**Надежда ФЕДОРОВА, 35 çулта:**

– Студент чухне Чăваш патшалăх академи драма театрĕнчен тухма пĕлмен. Кашни кунах кайни те пулнă. Пĕррехинче премьера пулмалла, пирĕн вара, выçă студентсен, билет туянма укçа çук. Кулса вилмелле, темиçе сехет маларах кайрăмăр та театрта пытанса лартăмăр. Каç пуласса кĕтсе çывăрсах кайнă. Спектакль курма килнĕ çынсен сассипе вăранса кайрăмăр. Куçа сăтăркаласа тухрăмăр хайхи. «Мулкачсем» валли кам вырăн хатĕрлесе хутăр? Икĕ сехет балкон çинче хĕсĕнкелесе тăтăмăр. Хырăм выçă пулин те кăмăл калама çук лайăхчĕ. Эпир премьерăна лекнĕ-çке.

Çемьепе театра тухса çӳреме йывăртарах. Каçхине ачапа урок тумалла. Шăматкун канмалла, мунча кĕмелле, вырсарникун ĕçе хатĕрленмелле.

**Татьяна ИЛЬИНА, 43 çулта:**

– Театра час-часах çӳретĕп тесе калаймастăп. Хушăран пĕрре çитсе килни те – савăнăç. Тăтăш çӳреме ялтан килмелле-çке. Пирĕн вара картиш тулли выльăх-чĕрлĕх – вĕсене пăхмалла. Хĕрарăмсемпе çулталăкра пĕрре пуçтарăнатпăр-ха... Хулара вĕреннĕ чухне çӳремен мар, Праски кинемее те аван пĕлетпĕр. Çамрăк артистсене палламастăп вара. Юлашкинчен спектакль курма кĕркунне кайнăччĕ. «Вĕçсе иртеççĕ хăлаксем» мелодрамăна йĕре-йĕре пăхрăмăр.

**Зинаида ПЕТРОВА, 79 çулта:**

– Ай-уй, мĕн театрĕ?! Хулара пулмастăп та темелле. Спектакль курассишĕнех çӳремен çав. Маларах телекуравпа та кăтарткалатчĕç-ха вĕсене – савăнсах пăхаттăмăр, халĕ çук ĕнтĕ. Сайра хутра хăйсем ялти клуба килсен юлмастăп вара.

# Республика Пуçлăхĕ журналистсемпе тĕл пулчĕ



**Влаçăн тĕрлĕ шайри юппине нумай чухне халăхшăн "тăрăшманшăн" сăмах лекет. Çав вăхăтрах пирĕнтен чылайăшĕ хамăрăн пурнăçа çăмăллăх кӳрекен йышăнусем пирки пĕлмест те. Ыйту: мĕн тумалла? Хуравĕ пĕрре – пурнăçпа тан пырас килсессĕн, паян пулса иртекен улшăнусем пирки вăхăтра пĕлес тесессĕн, паллах, хаçат-журнал вуламалла, радио итлемелле, телекуравпа çывăх пулмалла. Мĕн пытармалли, паян МИХсенче вăй хуракансене те сулмаклă сăмах леккелет вулаканран, итлекенрен, кураканран. Çапах та массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем хăйсен тĕп тивĕçне чыслăн пурнăçлаççĕ – халăх патне çĕнĕ хыпара вăхăтра илсе çитереççĕ. Чăваш енри паллă журналистсемпе тĕл пулнă май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев шăпах çак ыйтусем тавра сăмах хускатрĕ те.**

Хальхинче Михаил Васильевич калем ăстисемпе "Росинка" спорт тата сывлăха пиçĕхтермелли центрта уçă сывлăшра тĕл пулчĕ. Журналистсем яланах влаçпа халăх хушшинчи кĕпер пулнă. Пĕрлехи тата пĕрпĕрне ăнланса пурнăçланă ĕç çимĕçне кӳретех. Михаил Игнатьев МИХсен ĕçченĕсене тăрăшулăхшăн, оперативлăхшăн, республика аталанăвне объективлă çутатнăшăн тав турĕ. Журналистсем яланах халăх хушшинче. Çынсене ытларах мĕн хумхантарнине те питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ вĕсем. Тĕлпулупа усă курса хальхинче те республика Пуçлăхне тĕрлĕ ыйтăва хуравлама ыйтрĕç вĕсем. Официаллă мар лару-тăрура хутшăннипе усă курма та манмарĕç – тăван тăрăха тата лайăхрах аталанма пулăшас тĕлĕшпе Пуçлăха сĕнӳсем те пачĕç. Мĕн тăвăн – журналистсем çивĕч чĕлхипе палăрса тăраççĕ. Ертӳçĕн мĕнле ыйту илтес килет, хăшĕ вара уншăн кăмăллах пулманнипе те кăсăкланчĕç: ара, çитес вăхăтрах Михаил Васильевич йăлана кĕнĕ тăрăх пресс-конференцие йыхравлĕ. Республика Пуçлăхĕ кирек хăш ыйтăва та яланхиллех туллин хуравларĕ. Çук, нимĕнле ыйту та хăратмасть – кирек хăш отрасль пирки те уççăн калаçма яланах хатĕр. Министрсене те çапла ĕçлеме çирĕппĕн хистенине палăртрĕ – ведомствăпа çыхăннă ыйтусене унталла-унталла "хăваламалла" мар, яваплăха хăйсем çине илмелле те татса памалла. Çавăн чухне кăна пулĕ ăнăçу. Тата – ĕçе кашниех юратса пурнăçласан. Журналистсен енчен вара çитменлĕхсене асăрхама пĕлни пĕлтерĕшлĕ. Кирек хăш шайри ертӳлĕхе те критиклеме хăрамалла мар, чăн та, конструктивлă пулмалла вăл. Юрату тавра сăмах хускалнине кура – ара, журналистсем те çынсемех, çуркунне, уçă сывлăш, уçă калаçу витĕм кӳчĕ ахăртнех – калем ăстисем те çакнах палăртрĕç: "Эпир те... юратса критиклетпĕр". Влаçпа МИХ ĕçченĕсем пĕр шухăш патне



Борис ФИЛАТОВ сăнӳкерчĕкĕсем.

çитсе тухни вара – критикăна йышăнса, ăна шута илсе, çитменлĕхсене тӳрлетсе – малашне те пĕр-пĕрне ăнланса çитĕнӳ çулĕпе çирĕппĕн утасса шанăç кӳрет.

**Маргарита ИЛЬИНА.**



ХАКСЕМ

# Çул укçи ӳснĕ

Хаксем ӳснĕ май çул укçи те ыттисенчен юлмарĕ. Хула çумĕнчи тата хуласен хушшинчи маршрутсенче хаксем улшăнмарĕç-ха, анчах хулара пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа троллейбусри çулçӳрев 1 тенкĕ хушăнса 15 тенке çитрĕ. «Маршруткăсенчи» билет хакĕ 20-пе танлашрĕ.

Тариф службиӳсĕме мĕнле транспорт пулнине кура тума сĕннĕ. Çавăнпах ăна икĕ категорие пайланă. Пĕри – М2, унта водительсĕр пуçне 8 вырăнран ытларах тата йывăрăшĕпе 5 тоннăран çăмăлрах транспорт кĕрет. Тепри – М3, унăн йышĕнче 8 вырăнран ытларах, 5 тоннăран йывăртарах транспорт. Çапла М3 категоришĕн тарифсем улшăнмаççĕ. Шупашкар – Çĕнĕ Шупашкар маршрут çинче те М3 хакĕ унчченхиех юлать, М2 вара 4 тенкĕ хакланать. Халĕччен вăл 19 тенкĕ пулнă. Шупашкар – Кӳкеç маршрутпа пĕчĕкрех транспортпа çула тухакансен 20 тенкĕ тӳлемелле. Пысăкраххи малтанхиллех 15-16 тенкĕпе илсе çӳрет. Билет хакĕ карточкăпа е укçан тӳленинчен килет.

Троллейбуспа çӳремелли уйăхлăх билета та малашне 650 вырăнне 700 тенкĕ парса илмелле. Автобуспа ярăнмаллишĕн – 750, пĕрлехи билетшăн – 1050 тенкĕ тӳлеме тивĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Аннесем ăрăва тăсма май туса парĕç-ши?

**Татьяна НАУМОВА**

**"Хыпар" Издательство çурчĕ тĕрлĕ районта уявсем ирттернĕ май нумаях пулмасть Елчĕке çитрĕ. Районти библиотекарьсемпе культура çурчĕсенче ĕçлекенсем пуçтарăннăччĕ тĕл пулăва. Елчĕксем чăвашла калаçнипе журналистсем кăмăллă пулчĕç темелле – чылайăшĕ палăртрĕ çакна.**

**Чăн та, тăван чĕлхе чăннипех шăпчăк юрри евĕр янăрать. Çепĕç те ачаш, илемлĕ вăл. Чĕлхе – пирĕн мул, пуянлăх, мухтав. Шел, çакна пурте ăнланмасть. Çавăнпах сăмахлăхăмăра упрама, ăна хисеплеме-юратма чылайăшĕ ăнтăлмасть.**

**Çакна халĕ кашни яла пырса кĕрсенех куратăн. Маларах вырăсланнă чăвашсем ытларах хулара çеç пурăнатчĕç, халĕ вĕсем – кашни кĕтесрех. Хула çывăхĕнчи çеç мар, аякри ялсенче те çамрăксем тепĕр чухне тăрăшсах вырăсла чĕлхе хуçаççĕ. Ĕмĕрĕпе чăвашла калаçнăскерсем халĕ хăйсен тĕпренчĕкĕсене вырăсла хăнăхтаракан та çук мар. Асламăшĕ-кукамăшĕ те мăнукĕсемпе илемлĕ чăваш чĕлхипе мар, вырăсла хутшăнать.**

**Амăшĕн юратăвĕ ачана кăкăр сĕчĕпе куçать теççĕ. Эппин, тăван чĕлхене хакласси те çак тапхăртах пуçланать. Анчах та шел, юлашки вăхăтра пепкине чăвашла калаçма чунран вĕрентнĕ аннесене, сăпка юрри шăрантарса утьăкка сиктернĕ асаннесене, юмах-халап каласа тĕлĕнтернĕ кукамайсене кӳрентеретпĕр, вĕсемпе расна чĕлхепе калаçатпăр. Çавăнпах тăван сăмахлăхран пăрăнма хăтланакан, чăвашла калаçма вăтанакан нумай. Вĕсем çамрăксен хушшинче çеç мар, аслисен йышĕнче те пур халĕ.**

**Ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкне вырăсла кăна вĕрентни пуçа ниепле те вырнаçаймасть. Тăван чĕлхепе çеç хутшăнсан ыттине хăнăхаймасран хăраççĕ-ши? Ара, ачисен ӳссен хулана çул тытмалла-çке. Унта вара таса та хитре пуплемелле. Темшĕн чăвашла акцентран вăтанатпăр. Чĕлхен хăйне евĕрлĕхне палăртма шикленетпĕр. Кун пек чухне ялан грузинсем, эрменсем аса килеççĕ. Хăйсем мĕнле наци çынни иккенне палăртса калаçма епле ăста вĕсем. Чĕлхи те илемлĕн янăрать. Эпир вара вырăсла таса тухмасран хăратпăр та ăна тĕплĕнрех вĕренме талпăнатпăр. Шăпăрлансене чăвашла тĕрĕс те яка калаçма хăнăхтарма тепĕр чух пачах манатпăр. Чăвашла та, вырăсла та пулса тухаймасть вара.**

**Командировкăра Патăрьел районĕнче пулни асăмра. Чăваш ялĕнчех ача садĕнче тĕпренчĕксемпе вырăсла калаçни тĕлĕнтерчĕ ун чухне. "Хăшĕ-пĕри хула ачи, Шупашкарти черет çитиччен ялта ӳсеççĕ. Теприсемпе ашшĕпе амăшĕ ятарласа вырăсла калаçать", – пулчĕ воспитательница хуравĕ. Унран та ытла шкулта шăпах чăваш чĕлхи вĕрентекен, хĕрне илме килнĕскер те пепкипе тăван сăмахпа мар, вырăсла калаçать! "Эпир çамрăк чухнех "чăваш чĕлхи Канашран иртсен кирлĕ мар" тетчĕç. Чăннипех çапла. Темле пулсан та ачапа чăвашла калаççан вăл вырăс чĕлхине тикĕс хăнăхаймасть, – терĕ вăл. – Паллах, манăн кун пек калама юрамасть. Чăваш чĕлхине вĕрентнине шута илсен – пушшех те. Апла пулин те пĕр манăн шухăш çеç мар çакă", – тӳрре тухма хăтланчĕ учитель.**

**Пĕчĕкскерсем тĕрлĕ çĕнĕлĕхе хăвăртах хăнăхаççĕ. Вырăсла та, чăвашла та илемлĕ калаçакан ачасене хам та курнă. Ялта пурăнакан тăванăм та хĕрĕ пирки: «Телевизор пăхать те вырăсла питĕ аван калаçать, эпĕ ун чухлĕ те тĕшмĕртместĕп. Ӳссен, паллах, икĕ чĕлхене та аван чухлĕ вăл», – тет.**

**Тăван чĕлхене çапах та кун çути парнелекенĕнех хăнăхтармалла çав. Тăван культурăна хисеплеме, ăна хаклама, упрама хистекен кăмăл тем тесен те кăкăр сĕчĕпех куçмалла.**

**«Чăвашла та, вырăсла та мар» тенĕрен, нумай чухне таса калаçманни хăлхана тăрăнать. Илемлĕ те таса сăмахланине сайра та пулин илтсен вара чун савăнать. Тăван чĕлхе шăнкăр-шăнкăр шыв пек юхать, шăпчăк юрри евĕр илтĕнет. Итлеме те, калаçма та кăмăллă.**

**Шупашкарти ют чĕлхесен шкулĕн директорĕ Александр Блинов аса килет. Ытти сăмахлăхпа пĕрлех вăл чăвашла та тĕпчет-вĕренет. Темиçе çул каялла çеç-ха паянхи пек тасан пуплейместчĕ вăл. Куллен хăнăхса пырать. Тăван чĕлхене вĕрентекенсемпе йĕркеленĕ пĕр ăмăртура ĕçтешĕсемпе те ятарласа никам хистемесĕр чăвашла калаçнине пĕлтернĕччĕ. Хăть те мĕнле чĕлхене те хăнăхас тесен чи малтан унпа калаçмаллине палăртнăччĕ. Темĕнле йывăр килсен те, чĕлхе хуçăлсан та вăл шухăш-кăмăлне чăвашлах палăртма тăрăшать. Ăна вĕренессишĕн ăнтăлать.**

**21-мĕш ĕмĕре чăваш ятпах кĕтĕмĕр-ха. Анчах халăхăн 27,8 процентĕ тăван чĕлхепе калаçаймасть, вулаймасть. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнче 136 пин йăхташа «çухатни» канăççăрлантарать. 2010 çулхи Пĕтĕм халăх çырăвĕн кăтартăвĕ йыш татах чакнине систерчĕ. 1989 çулта çĕршывра 1 миллион та 773 пин чăваш пурăннă. Çак цифрăна каялла тавăрасси ĕмĕтре çеç-тĕр çав...**

**Чăваш хĕрарăмĕ пурăннă чухне халăх пĕтмессе шанас килет. Ăру малтан-мала тăсăлсан эпир çĕр питĕнчен çухалас çук. Анчах кун çути парнеленĕ аннесем ăрăва тăсма май туса парĕç-ши?**



УЛТАВ



# "Власов следователь" шăнкăравлать..."

**Пĕлтĕртенпе "Власов следователь" Шупашкарти нумай çемьене шăнкăравлама ĕлкĕрнĕ. Пулăшас тĕллевлине пĕлтернĕ вăл. Чăннипе вара хăй пуйма тăрăшнă. Мĕнле-и? Çынсене тăванне уголовлă яваплăхран хăтарма укçа кирлине систернĕ. Именмесĕрех çĕр пин тенкĕрен пуçласа ытларах ыйтнă. Хăшĕ-пĕри ку ултав иккенне тавçăрайман… Тĕрĕссипе майĕ те пулман-тăр, ытла та çирĕппĕн калаçнă ултавçă.**

Хваттерти телефона тытсан кĕç-вĕç йĕрсе ярас пек "кукашшĕ-кукамăшне", "тăванне" хăй инкеке лекнине пĕлтернĕ çамрăк çын. Лини леш вĕçĕнчи çын: "Валера, эсĕ-и ку?" – тесе ыйтсан: "Эпĕ, – хураланă ултавçă. – Лавккана кайнă чухне çаратас шухăшлă каччăпа тытăçрăмăр, хытăрах чышрăм та вăл ÿксе пуçне хытах амантрĕ. Эпĕ халĕ полицире. Следовательпе калаçрăм – çынни лайăх пек. Телефона ăна паратăп", – çакнашкал калаçу пулса иртнĕ. Кун хыççăн "Сергей Иванович Власов" калаçма пуçланă. Хăйĕнпе шăпах çапла паллаштарнă та Новосибирск облаçĕнче çуралнă 29 çулти йĕкĕт. Сассине улăштарса икĕ çыншăн та хăех сăмах ваклань вăл.

Шăнкăрав ултав иккенне тавçăракан та пулнă. Çав вăхăтрах шар курнисем те сахал мар. Кăçалхи нарăс уйăхĕнче уголовлă шырав ĕçченĕсем хăйсем чăннипех пултарулла иккенне тепĕр хутчен çирĕплетнĕ, хайхи "Власова" шыраса тупнă. Черетлĕ командировка ăнăçлă пулнă темелле. Ултавçа тупас тĕллевпе аякри тăрăха темиçе хутчен те çитсе килнĕ. Пĕтĕмĕшле виçĕ уйăх таран пурăннă. Ăна мĕнле шыраса тупнине ЧР Шалти ĕçсен министерствин уголовлă шырав управленийĕн пай пуçлăхĕ Евгений Андреев каласа кăтартрĕ.

### Чунсăр ултавçă

– Суйнине ăнкарманнисене тăванĕ пăтăрмаха е аварие лекнине пĕлтернĕ вăл. Суранланни-аманнине сиплеме укçа кирлине каланă. Çаксене пĕтĕмпех пытармасăр каласа кăтартрĕ. Преступник мĕнле сивĕ те хаяр чунлă пулни тĕлĕнтерчĕ. Пĕр шелсĕр, çирĕппĕн калаçнă вăл. Мĕн калассине тахçанах пăхмасăр пĕлнине систерчĕ. Лару-тăрăва калаçу еплерех аталаннине кура хакласа тепĕр чухне текста улшăнусем кĕртнине те пытармарĕ. "Калаçăва мĕнле йĕркелемеллине те пĕлетĕп. Кукаçи-кукамай малтанласах хăйсене мĕнле тытнине сăнатăп", – терĕ айăпланакан следстви ирттернĕ май, – ултавçă чунсăрлăхĕнчен халĕ те тĕлĕнме пăрахман-ха Евгений Анатольевич.

Кăткăслăха лекнĕ тăванне 8 çул таранччен тĕрмене хупма пултарнине, ăна чăннипех пулăшма май пуррине пĕлтернĕ ултавçă. Суранланнин çемйи калаçса татăлма хирĕç мар имĕш. Трубкăна тытнă çын турткаланма, иккĕленме, тăванĕсемпе канашламаллине калама пуçласан: "Эпĕ сире пулăшасшăн. Тĕрĕссипе, сирĕнпе çыхăннăшăн мана ĕçрен те кăларма пултараççĕ. Эсир вара иккĕленетĕр", – çирĕп пулнă "следователь". Шухăшлама вăхăт паман вăл. Телефонран айккине те пăрăнтарман. Турткаланнине те ырламан, 10-15 минут таранах калаçтарнă вăл çынсене. Хăй çак вăхăтра укçана кам илсе каясса шыранă.

Паллах, кун пек укçа алă айĕнче никамăн та çук. Пурри-çукки те перекет кĕнеки, карточка çинче.

– Темех мар ку, хальлĕхе мĕн пуррине ярса парăр та ыттине кайран аманнин тăванĕсемпе калаçса татăлатăр, – тенĕ "ырă кăмăллăскер". Камăн 30, камăн 50 пин тенкĕ тупăннă. Çак укçашăн расписка пама шантарнă вăл.

Мула вара Интернет урлă тупнă таксистсем, ятарлă водительсем пыра-пыра илнĕ /вĕсен ячĕсем те паллă/. Ĕç шыранине тĕнче тетелĕнче пĕлтернĕ çамрăксем вĕсем. Пулăшуçăсене, паллах, процент тивĕçнĕ. Укçана банкомат урлă хăйсем куçаракансем те пулнă. Анчах нухрат кирлĕ вырăна çитсен çыхăну татăлнă.

### Çур сехетре 50 пин çухалнă

Мĕншĕн – Шупашкар-ха? Ара, хуласене пÿрнепе карта çинче тĕллесе тенĕ пек суйланă вăл. Интернетра килти телефон номерне шыраса тупнă та тĕп хуламăрти çурçĕр-хĕвеланăç районĕнчи 45-пе пуçланакан номерсемпе шăнкăравланă, кайри цифрăсене çеç улăштарса пынă. Кунне 300-400 номерпе çыхăннă вăл! Çапла майпа... Мускав район судне те лекнĕ! Паллах, вахтера улталама май килмен.

Сасă пачах палламан пек, урăхла туйăннине те сиснĕ-ха хăш-пĕр ватă. Çавăнпах иккĕленнĕ те. Анчах "телефон инçе выртать", "сăмса хуçăк – çавăнпа сасă урăхла тухать" тенине илтсен ĕненмех тивнĕ. Ултавçă серепине çакланнă пĕр кинемей акă çур сехетлĕхе кăна пĕччен юлнă. Ытти чухне ялана хĕрĕ унпа юнашар пулнă. Вăл лавккана тухнă вăхăтра амăшĕ телефонпа калаçма та, укçана тыттарса яма та ĕлкĕрнĕ. Çапла 50 пин тенкĕ самантрах "ураланнă".

Асăрханулăх пирки те манман "Власов". Çавăнпах симкисене, телефонне улăштарсах тăнă. Вунă çул кирпĕч шутланăскер ăна-кăна тавçăракан пулса çитнĕ-тĕр. Ара, çамрăк пулин те темиçе хутчен те айăпланма ĕлкĕрнĕ вăл. Ирĕке те пĕлтĕр çеç тухнă-ха. Пурлăх çаратнăшăн ирĕклĕхсĕр юлнăскер тĕрмере наркотиксемпе çыхланнă та срок татах хушăннă. Наркăмăшпа айкашнăран укçа кирлĕ пулнă та ăна. Оперативниксен шухăшĕпе, вăл ку меслете тĕрмерех алла илме тытăннă.

Тĕрлĕ региона шăнкăравланă вăл. Ултава çакланакансем сахалланнине, ĕненекенсен йышĕ чакнине кура профилактика ĕçне туса ирттернине, ятарлă тĕрĕслев иртме пултарнине ăнланнă та урăх тăрăхри телефонсене "тустарма" пикеннĕ.

"Хăнасене" пачах кĕтменччĕ вăл, хăйне çапла хăвăрт тупасса шухăшламан та. Çапах Бердскри пĕр хваттере ирхине пырса кĕрсе тытса чартăмăр ăна, – кăмăллăн палăртрĕ çулçÿреврe пулнă Андрей Яблоков оперуполномоченнăй.

Паллах, ку ĕçре чи йывăрри кам тата ăçтан шăнкăравланине пĕлесси. Вăл вара хăть хăш самантпа та усă курнă. Пулă тытать-и, урампа пырать-и, килĕнче ларать-и – аллинчен телефон яман ултавçă. Пĕчĕк ачипе ларнă чухне те, руль умĕнче те калаçма меллĕ пулнă уншăн. Автомастерскойĕнче ĕçлекенскер тепĕр чухне гаражра та телефон тытнă.

Мăшăрĕ упăшки мĕн хăтланнине чухланă-ха, анчах çак пурлăха пачах курман вăл. "Власов" ку укçана наркотик туянсах пĕтернĕ. Çакна хăй те пытарман.

### Çĕнтерÿ ячĕпе – парне

Телефонпа шăнкăравласа тĕрлĕ сăлтавпа укçа сăптăрни ултавăн пĕр тĕсĕ çеç-ха. Мулпа çыхăннă преступленисене хăйсене почтальон, сутуçă, социаллă ĕçчен тесе палăртакансем те чылай пурнăçлаççĕ. Акă нумаях пулмасть уголовлă шырав ĕçченĕсем шăпах çакнашкаллисен йышне кĕрекен икĕ хĕрарăма тытса чарнă. Мускав тата Владимир облаçĕнче çуралнăскерсем Канашра тата Шупашкарта виçĕ çынна улталани паллă. Кунашкал преступленисене ытти регионта та тума пултарнине шута илсе ĕçе малалла тишкереççĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕнче Канашра кăнтăрла çитеспе лавккана каякан мучие икĕ хĕр тĕл пулса чарнă. Хăйсемпе социаллă ĕçченсем пек паллаштарнă пикесем. Сĕнтерÿ кунĕ çывхарнă май ветерана компьютер парнелессе пĕлтернĕ. Шăпах Çĕршыва хÿтĕлекенсен кунĕ çывхарнă тата. Пысăк парне тивĕçнишĕн савăннăскер ырă кăмăллă хĕрсене килне ним шухăшсăр илсе кĕнĕ. Ара, ултавлă укçа нумай сарăлнине, тепĕр чухне почтальонсем те пенси вырăнне суя хут тыттарса хăварнине пĕлтернĕ вĕсем. Килĕнче пуррисене чăн укçах-и тесе тĕрĕслеме, суйисене епле уйăрмаллине каласа кăтартма шантарнă. Пуррине сĕтел çине кăларса хурсан, паллах, пĕрин тула тухасси килнĕ, теприн шыв ĕçес кăмăлĕ пулнă. Таравтлă кил хуçи айккине пăрăнсанах хĕрсем тухса шăвăннă. Вĕсемпе пĕрлех 30 пин тенкĕ те çухалнă.

Виçĕ сехетренех Шупашкарта çак хĕрсенченех тата икĕ кинемей шар курнă. 20 пин тенкĕсĕр юлнă вĕсем. Юрать-ха пĕри хăйне улталанине тÿрех ăнланнă та хыççăн тухнă, подъездра çамрăк кÿршине курнă. Тин çеç тухса кайнă икĕ хĕр укçа вăрланине пĕлтерсен каччă пикесем хыççăн чупнă, вĕсем хăш еннелле пăраннине курнăскер хыççăн кайнă та майрасем "Хендай Солярис" машинăна ларнине курса юлнă. Шел, вĕсене çийĕнчех тытса чарма май килмен. Полицие шăнкăравланă тĕле хĕрсем республикăран тухса кайма ĕлкĕрнĕ. Мускавра регистрациленнĕ машинăпа кам ярăннине те тÿрех палăртайман. Владимир облаçĕнче пурăнакан çамрăк çын ячĕпе пулнă машина. Анчах унпа хуçи мар, тара илнĕ çынсем çÿренĕ иккен. Çав вăхăтрах проката ăçта пани те палăрман.

Çавах оперативниксем Чăваш Енре пулнă "гастролерсене" тупма, тытма пултарнă. Тĕрлĕ регионти уголовлă шыравçăсем пĕр-пĕринпе çыхăну йĕркелени çапла тума май панă та.

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

# Тимлĕхе çухатмалла мар

Çак эрнере ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов журналистсене кăçалхи икĕ уйăхăн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ.

Çак тапхăрта республикăри çулсем çинче 217 инкеке шута илнĕ. Вĕсенче 26 çын пурнăçĕ татăлнă, 323 çын аманнă.

– Пĕлтĕр ÿсĕр водительсене пула аварии йышлишĕн сăмах лекнĕччĕ, çакна Михаил Игнатьев хăйĕн Çырăвĕнче те палăртнăччĕ. Ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлетпĕр, çавăнпах çул çинчи йĕркене ÿсĕр водитель пăснă тĕслĕхсен шучĕ 44 процент чакнине палăртма пулать. Медицина тĕрĕслевне тухма хирĕçлекенсен йышĕ те сахалланчĕ, – пĕлтерчĕ Владимир Геннадьевич.

Ÿсĕрсем тенĕрен, вĕсен айăпĕпе 2 уйăхра 10 инкек пулнă, 2 çын вилнĕ, 15-ĕн аманнă. Çак тапхăрта руль умне ÿсĕрле ларнă 750/!/ водитель инспекторсен тĕлне лекнĕ.

Çул çинчи инкексенче çулталăк пуçланнăранпа 2 ача пурнăçĕ татăлнă. Пĕтĕмпе вара çул çинчи пăтăрмахсене 26 ача лекнĕ. Вĕсен хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе те чылай ĕçлемеллине палăртать Владимир Романов.

Республикăра машина шучĕ ÿссех пырать. Пĕлтĕр акă 300 пине яхăн техника единицине шута илнĕ, кăçал ку цифра 330 пинрен те иртет. Паллах, çулсем пушă мар. Федераци трассипе чупакан та питĕ йышлă. Çавăнпах çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессишĕн нумай ĕçлемелле.

Инкексем Шупашкарта ытларах пулаççĕ. Кунта ĕçлесе çитерейменнине йышăнать республикăри ÇÇХПИ тĕп инспекторĕ. Водительсем пĕр-пĕрне çул паманнишĕн те, çуран çÿрекен çине кĕрсе кайнипе те çыхăннă инкек сăлтавĕ. Сăмахран, икĕ уйăхра кăна çул урлă каçакан çине кĕрсе кайнă 87 тĕслĕхе шута илнĕ, вилнисем те пурте водитель айăпĕпе пурнăçран уйрăлнă.

Çул-йĕр правилисене куллен 70 водитель пăсать, çавна май вăл ыттисемшĕн те хăрушлăх кăларса тăратать.

Фотофиксаци пулăшнипе çак тапхăрта çул-йĕр правилине пăснă 36129 тĕслĕхе шута илнĕ.

ÇÇХПИ ĕçченĕсем çул çинчи хăрушсăрлăха çеç мар, обществăри йĕркелĕхе те тĕрĕслеççĕ. ШĔМĕн ытти ĕçченĕсемпе пĕрлех ПАИнче тăрăшакансем преступление уçса 74 уголовлă ĕç пуçарма пулăшнă.

Çак тапхăрта шыраври 176 техника единицине тупнă, вĕсенчен 5-шĕ – вăрланăскерсем. Çул çинче инкеке лекнĕ хыççăн тарнисем – 30.

Наркотиксен çулне хупассипе те ĕçлеççĕ çул-йĕр хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшакансем. Çулталăк пуçланнăранпа кунашкал 8 водителе чарнă, руль умне наркотикпе наркăмăшланнă хыççăн ларнăшăн администратиблă 8 ĕç пуçарнă.

ÇÇХПИ ĕçченĕсем йĕркене хăйсем пăснă тĕслĕхсем те пур. Кунашкаллисен йышне 26-ăн çакланнă.

Пуш уйăхĕн 6–7-мĕшĕсенче ÇÇХПИ ĕçченĕсем Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта профилактика рейчĕ ирттернĕ. Икĕ кунта 75 ÿсĕр водителе чарнă. Ку цифра патшалăх автоинспекци ĕçченĕсене тĕлĕнтерет. Рейд ирттнине, чарса тĕрĕслессе пĕлетăркачах хускатаççĕ-çке тимĕр урхамахне!

Улшăнса тăракан çанталăк та чылай инкек çуратать. Кăнтăрла ăшă, каçхине пăрлак – сукмакпа утасси чĕр нуша. Çул вара типĕпе пĕрех. Çакăнпа усă курса хăш-пĕр ватă машина çулĕ çине тухать иккен. Кун пек тĕслĕхе ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕ хăй те пĕрре мар курнине палăртать. Паллах, апла юрмасть, тимлĕхе пачах çухатмалла мар. Пĕр самант çеç асăрхануçăр пулни те инкек патне çитерет тепĕр чухне.

**Страницăна Татьяна НАУМОВА хатĕрленĕ.**

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ: 70 ÇУЛ

# «Çын куçĕнчен пăхас килмест»

**– Питĕ лайăх астăватăп, эпир, ялти вĕт-шакăр, Советскине ярмăрккана кайнăччĕ çав кун. Çанталăкĕ калама çук лайăхчĕ. Каруççельпе ярăнтăмăр, пĕремĕк илсе çирĕмĕр. "Вăрçă пуçланнă, вăрçă. Нимĕçсем пирĕн çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ", – кăшкăрашма пуçларĕç çынсем. Эпир, айван ача-пăча, аслисен калаçăвне ăша ытлах хывма та пĕлмен ун чухне. Вăрçă мĕн иккенне те ăнланман. Халăх тăрук саланса пĕтрĕ, вĕсем хыççăн эпир те килелле утрăмăр, – каласа кăтартать Çĕнĕ Тинкешре пурăнакан вăрçă ветеранĕ Михаил Руфов.**



Ашшĕне эрнеренех вăрçă хирне илсе каяççĕ. 1942 çулта 17 çулти Михаил ячĕпе те фронта кайма повестка килет.

– Çĕмĕрлене ялтан пиллĕкĕн тухса кайрăмăр. Йĕнипе аннен куçĕ шыççах ларнăччĕ. Тинкешри ытти хĕрарăмпа пĕрле ял вĕçĕнче алă сулса юлчĕ мĕскĕн. Тĕпренчĕкне камăн юн тăкма кăларса ярас килтĕр-ха? – куççульне шăлать Михаил Руфович. Тăшманран хӳтĕленме Мари Республикинче хатĕрлентернĕ хыççăн вунçиччĕри яшсене вăрçă хирне ăсатаççĕ.

Запорожьери чылай хулапа яла нимĕçсем пырса кĕни, сирпĕтни-çунтарни, унта чăтса ирттернĕ кашни кун Михаил Руфович асĕнче ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă.

– Пире, тин çеç алла хĕçпăшал тытма вĕреннĕскерсене, тӳрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Ирхине нимĕçсем çывăрма юратнипе усă курса тул çутăличченех атакăна тухаттăмăр. Пĕрремĕш тăхлан хулпуççине амантрĕ, иккĕмĕшĕ ĕнсене вăйлах касса кайрĕ. Тăн çухатса хирте кунĕпе выртнă эпĕ, вăрантăм, таврара никам та çук, пуç кашлать, хам тăрăх юн юхать. Бомба шăтăкĕнче пĕр салтака асăрхарăм. Аманнăскерне çурăм хыçне çакса аранах çывăхри пĕр яла илсе çитертĕм. Санитарсем хăвăртрах чупса тухса шкулти госпитале вырнаçтарчĕç. "Эсĕ кĕпепе çуралнă", – терĕ тухтăр çур ĕнсе çуккине курсан. Сывă та вăйлă пулнă çав ун чухне, çамрăк организм теме те чăтнă, – вăрçă çулĕсене куçĕ умне кăларать ветеран. Суранĕ тӳрленмесĕрех вăрçă хирне тухса утать Михаил. Сывалсах çитейменнине кура салтака эрне ытла саппас полкра тытаççĕ. Румынире каллех амантаççĕ ăна. Сипленнĕ хыççăн Болгарие, Венгрие, Чехословакие, кайран Австрие нимĕççенчен хăтарма хутшăнать чăваш салтакĕ. Германире 1949 çулччenех çарта тăрать Михаил Руфович.

Вăрçă хыççăн та нуши-терчĕ вĕçленмен-ха. Çапăçу хирне утса тухнăскерĕн кайран тата мĕн кăна тӳсме тивмен-ши? Вată салтак мирлĕ саманара мĕн чăтса ирттернисене хаçатра çыртарасшăн пулмарĕ.

– Çичĕ çултан тин таврăнтăм яла. Çĕртме уйăхĕччĕ. Атте те вăрçăран килнĕ. Анне тасасывах. Мана курсан мĕн тери хĕпĕртерĕç. Килте никам та алă усса ларман вăл вăхăтра. Тепĕр куннех çул-йĕр юсанă çĕре кайрăм. Унти ĕçе вĕçлесен çамрăксемпе вăрман касма çӳреме тытăнтăм, – аса илет ветеран.

Бригадирта – 20, пушарнăйра – 10, почтăра 4 çул ĕçленĕ Михаил Руфович. Мăшăрĕ колхозра вăкăрсем самăртнă çĕрте вăй хунă.

– Лайăхчĕ ман Зоя. 57 çул килĕштерсе пурăнтăмăр. Вăрçăнман, пĕр-пĕрне сивĕ сăмах каласа кӳрентермен, ялта çын култарман эпир. Икĕ ывăла та пӳрт лартма пулăшрăмăр. Халь акă 6 çул ĕнтĕ пĕчченех кун кунлатăп. Карчăккипе иксĕмĕре лайăхчĕ те, пăрахса кайрĕ çав мана, – каласа кăтартать хăй пурнăçĕ çинчен Михаил Руфов. Тĕрĕсех калаççĕ, тату пурнăç, пĕр-пĕрне хавхалантарни, çур сăмахран ăнланни çын ĕмĕрне тăсаççĕ çав.

Михаил Руфовичăн ывăлĕпе кинĕ юнашарах пурăнаççĕ. Çĕнĕ çуртра куçас темен ватă, киввинчех юлнă.

– Пĕччен те лайăх мана. Кунта карчăкăн шăрши те пур пек. Тепĕр чухне вăл юнашар пекех те туйăнать. Çамрăксен уйрăм пурăнмалла, ман вĕсене кансĕрлес килмест. Кĕпе-йĕме çуса параççĕ, килсе пулăшаççĕ, сывлăхпа кашни кунах кăсăкланаççĕ. Апатне вара хам та пĕçереетĕп. Салтак пулмани эпĕ, мĕн çын куçĕнчен пăхмалли пур? – тет ветеран.

Михаил Руфович радио итлеме юратать, хаçатсемпе те кăсăкланать. Румыни, Югослави, Германи укçи-тенкине паянхи кун та упрать. Вĕсене ашшĕ-амăшне, йăмăкĕсене кăтартма вăрçă хирĕнченех илсе килнĕ.

– Лаша çук, машина çук ман, çавăнпа та çуран нумай утатăп. Лавккана та хамах çӳретĕп. Хăть çулла, хăть хĕлле, çанталăкне те пăхса тăмастăп, уй-хире, улăхалла хăпарса анатăп, – хавхаланса калаçать вăрçă ветеранĕ.

Михаил Руфовичăн – икĕ ывăлпа пĕр хĕр, ултă мăнук, мăнукĕн виçĕ ачи. Кукаçи, асатте тесе чĕннине илтсен тем пекех савăнать вăл.

Украинăра вăрçă кĕрленĕшĕн, унта мирлĕ халăх юн тăкнăшăн кулянать Михаил Руфович. Ара, 1941-45 çулсенче вĕсемпе çума-çумăн тăрса çĕршыва хӳтĕленĕ, унти çынсем тус-тăван пекех çывăх шутланнă-çке. Украинсем пĕр чаçре те пулнă. "Вăрçăран хăрушши çĕр çинче нимĕн те çук. Пирĕн çĕршывăн ăна урăх курмалла ан пултăрччĕ", – тесе ăсатрĕ хĕн-хурне нумай тӳснĕ ветеран.

**Елена АТАМАНОВА.**
Етĕрне районĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

СЫВЛĂХ

# Ачасене хăтлă палатăсене вырнаçтарнă

2012 çул вĕçĕнче республикăри ача-пăча клиника больницинче паллиатив медицина пулăшăвĕн уйрăмĕ уçăлнă. Пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче ăна хула ача-пăча 3-мĕш больницине куçарнă. Çак уйрăм сиплейми йывăр чирлĕ 10 ачана харăсах йышăнма пултарать. Кашнине çывăх тăванĕсемпе пĕрле уйрăм палатăна вырнаçтараççĕ. Унта ятарлă оборудовани, телевизор, сивĕтмĕш, туалетпа ваннăй пур. Ачан ашшĕ-амăшĕ валли те вырăн çителĕклех. Палатăсене хăтлăлатма, медицина оборудованийĕ туянма республика бюджетĕнчен 14 миллион тенкĕ ытла уйăрнă.

Йывăр чирлĕ ачасене паллиатив пулăшăвĕ пани – тĕпренчĕкпе тата унăн çывăх çыннисемпе тачă хутшăнса ĕçлени. Шурă халатлисем ашшĕ-амăшне пепкине килте пăхма вĕрентеççĕ, психологи пулăшăвĕ параççĕ.

Пирĕн республикăра сиплейми чирлĕ 130 ачана шута илнĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ тĕп нерв тытăмĕн чирĕсемпе нушаланать.

Çак эрнере паллиатив медицина пулăшăвĕн уйрăмне журналистсем çитсе килчĕç, унти лару-тăрупа паллашрĕç.

ЧР сывлăх сыхлав министрĕн пĕрремĕш çумĕ Татьяна Богданова çак уйрăма 20 вырăн таран пысăклатмаллине, ашшĕ-амăшне больницăра кăна мар, килте те сĕнӳ-канашпа пулăшса тăмаллине палăртрĕ.

Ака-çу уйăхĕсенче çакнашкал ачасемпе ĕçлекен специалистсене, çав шутра тухса çӳрекен бригада йышне, участок педиатрĕсене йывăр чирлисене пулăшу пама вĕрентĕç.

Надир Жамлиханов тĕп тухтăр каланă тăрăх, çитес вăхăтра çӳлерех асăннă уйрăм специалисчĕсен штачĕ пысăкланĕ, сенсор пӳлĕмĕ, кану вырăнĕ пуянланĕ.

Паллиатив медицина пулăшăвĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Олег Иванов хăш-пĕр оборудованипе килте усă курма вĕрентес тĕлĕшпе республика малта пыни çинче чарăнса тăчĕ.

Çак уйрăмра ачисемпе пĕрле вырăн тупнă ашшĕ-амăшĕ сывлăх сыхлавçисен ĕçĕпе кăмăллă. Вĕсем пепке ĕмĕрне тăсма пулăшакансене тав тăваççĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ПУЛАТЬ-ÇКЕ

# Ӳркенмесен выçă лармастăн

**Элĕк районĕнчи Тури Татмăшри Иван Сорокин çуралнăранпа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен те çуралса ӳснĕ кĕтесрен уйрăлман. Хăйне телейлĕ туйма пурте пур халĕ унăн: кил-çурчĕ те, çывăх çынни те, ачисем те. Лăпкăн кăна пурăн темелле, çук вĕт – 63-ри арçын канăç мĕнне пĕлмест. Унăн аллинчен пĕр-пĕр тимĕр татăкĕ татăлма пĕлмест: е мотоблок валли прицеп, е мунча кăмаки ăсталать. Пĕр сăмахпа, алă усса ларма пултараймасть, чунĕ ялан ĕç патне туртăнать унăн.**

**Иван Флорович техника енĕпе ятарлă пĕлӳ илмен пулин те тĕрлĕ тимĕр-тăмăрпа усă курса пĕчĕк трактор пуçтарать.**

**– Ӳркенмесен пĕтĕмпех пулать, – тет арçын.**



Унăн ашшĕпе амăшĕ, Флорпа Валентина, вунпĕр ачана кун çути парнеленĕ. Ӳссе çитĕнсен кашни тĕрлĕ çĕре саланнă, хăйĕн вырăнне тупнă. Иван Сорокин вара, мĕн пĕчĕкрен ĕçе кӳлĕнсе ӳснĕскер, тăван кĕтесрен уйрăлма пултарайман, çуралнă вырăнти çутçанталăк илемĕ илĕртнĕрен-ши, шăпине Татмăш ялĕпе çыхăнтарма шухăшланă. Водителе вĕренсе тухнăскер "Волга" колхозра ĕçлеме пуçланă. Автомашинăпа Элĕке тата ытти çĕре сĕт турттарнă. Çав вăхăтрах вăл, ĕçрен пушаннă хыççăн, хăй тĕллĕн кил таврашĕнче çӳремелли пĕчĕк техника ăсталама пуçланă. Кун хыççăн кун иртнĕ – Иван Флорович ĕçе майĕпен вĕçне çитернĕ, техникăна пĕр чăрмавсăр тапратса янă. Эх, савăннă вăл, хăйĕн тахçанхи тĕллевне пурнăça кĕртме пултарнишĕн хытă хĕпĕртенĕ. Тепĕр темиçе кунран пĕччен ăсталанă тăвата урапаллă техника хатĕрне ял халăхĕ умне кăларнă. Çынсем унăн пултарулăхĕнчен тĕлĕннĕ: мĕнле маттур! Ара, килти условисенче бензинпа çӳрекен техника хута ярасси пуринчен те пулмасть-çке. Хавхалану авăрне çакланнă арçын ытларах та ытларах çунатланнă, тепĕр техника ăсталама пикеннĕ. Пуçăннă ĕçе ик-виç уйăхра вĕçлеме май килтернĕ. Каллех пысăк савăнăç. Çапла, майĕпен çĕнĕ ĕçе алла илнĕ Иван Флорович. Ку çеç те мар, кĕçех мунча кăмакисем хатĕрлеме тытăннă. Пĕрре, унтан тепре – вĕсене райцентрти пасарта сутнă. Ĕçе хуларан яла каялла таврăннă ывăлне те явăçтарнă. Иккĕн иккĕнех, мотоблок валли прицеп та туса хатĕрлеме пуçланă вĕсем. Ăсталăха кунсерен ӳстерсе пынă. Халĕ Татмăшри ăста Сорокинсене Элĕк тăрăхĕнче палламан çын çук та темелле

**Юрий КОРНИЛОВ.**
Элĕк районĕ.



ЫРКĂМĂЛЛĂХ КĔТЕСĔ



*Хисеплĕ вулакансем! Асăрхарăр-и? Хаçатра "Ыркăмăллăх кĕтесĕ" уçма шухăшларăмăр. Ахăртнех, килте нумайăшĕн кивĕ е усă курман ытлашши хатĕр-хĕтĕр /сĕтел-пукан, ача-пăча çи-пуçĕ.../ пур, вĕсене пирĕн хаçат урлă вырнаçтарма май килĕ. Çынна ырă тума, пулăшма васкакансенчен пĕлтерÿсем кĕтетпĕр. Телефон номерне тата хăвăр ăçта пураннине кăтартма ан манăр.*

● **Шупашкарта пурăнатăп. Хĕллехи, искусстваллă тиртен çĕленĕ çутă-хăмăр тĕслĕ кĕске кĕрĕк сĕнетĕп. Хĕрарăм валли. 48-мĕш размер.**

● **Хĕллехи çыхнă калпаксем. Хĕр-хĕрарăм валли. Тел.: 8-905-346-59-77.**

*Асăрхăр! Çак япаласене ахалех, укçасăрах, паратпăр.*

*Пĕлтерÿсене те – эсир çав япаласене ахалех пама хирĕç мар пулсан – хаçата тÿлевсĕрех вырнаçтаратпăр. Ыйтусем пулсан редакци телефон номерĕсемпе шăнкăравласа пĕлмелле.*

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Пулăпа çĕрулми кукăлĕ



**3 çăмарта, 1 стакан çăнăх, 0,5 стакан хăйма, 0,5 стакан майонез, 4-5 çĕрулми, пуçлă 2 сухан, 2 банка пулă консерви, апат соди, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Çăмартана хăймапа, майонезпа, çăнăхпа, тăварпа, пăрăçпа, апат содипе пăтратмалла. Çу сĕрнĕ çатмана çаврашкан туранă çĕрулми, сухан, пулă татăкĕсем хумалла. Çимĕçсене маларах хатĕрленĕ чустапа витмелле. Кукăле ылтăн тĕс çапиччен духовкăра пĕçермелле.

### Шалча пăрçи салачĕ

**300 грамм пăру какайĕ, консервланă 300 грамм шалча пăрçи, тăварланă 150 грамм хăяр, чĕрĕ 150 грамм хăяр, 300 грамм шурă çăкăр, 1 апат кашăкĕ тип çу, 3 шăл ыхра, майонез, тăвар кирлĕ.**

Пăру какайне пĕçермелле. Тăваткалласа туранă çăкăра тип çупа ăшаламалла. Какайпа хăяра – пĕрчĕлесе, ыхрана вĕттĕн касмалла. Çимĕçсене майонезпа, тăварпа пăтратмалла.

### Купăстапа, хăймапа

**500 грамм купăста, 100 грамм услам çу, 3 çăмарта, 5 апат кашăкĕ хăйма, 3 апат кашăкĕ майонез, 6 апат кашăкĕ çăнăх, 1 чей кашăкĕ тăвар, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă купăстана çатмана хумалла. Ун çине ирĕлтернĕ услам çу ямалла.

Çăмартана пăтратса кăпăклантармалла, хăйма, майонез, çăнăх, тăвар, апат соди хушмалла. Купăстана шĕвĕ чустапа витмелле. Кукăле духовкăна лартмалла.

### Çĕрулми хăпартăвĕ

**10 çĕрулми, 6 çăмарта, пуçлă 2 сухан, 150 грамм сыр, 3 апат кашăкĕ çăнăх, 1 апат кашăкĕ тип çу, тăвар кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмие теркăламалла, çăнăх, пăтратса кăпăклантарнă çăмарта хушмалла. Çурма çаврашкан каснă сухана ăшаламалла. Çĕрулмипе сухана çатмана сийлесе хумалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла. Хăпартăва духовкăра 30-40 минут пĕçермелле.

### Купăста катлечĕ

**1 килограмм купăста, 3 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 1 стакан шыв, вĕтетнĕ 2-3 апат кашăкĕ сухари, тип çу, тăвар кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă купăстана кастрюле ямалла, çур стакан шыв, 1 апат кашăкĕ тип çу хушмалла. Пахчаçимĕç çурма пиçсен манна кĕрпи, татах шыв ямалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Купăста фаршĕ çемçелсен çулăма сÿнтермелле. Çак хутăшран катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăваламалла. Купăста катлечĕсене икĕ енчен ăшаламалла.

### Пылак плов

**300 грамм рис, 100-шер грамм иçĕм, курага, хура слива, 2 апат кашăкĕ сахăр, тип çу кирлĕ.**

Рис пĕçермелле, шывне сăрăхтармалла. 4-6 пая каснă курагапа хура сливăна, иçĕме ăшаламалла, сахăр сапмалла. Çак хутăша рис хушмалла, 5 минутран çулăма сÿнтермелле.

### Типĕ салачĕ

**Пĕçернĕ 4 çĕрулми, консервланă 1 банка шалча пăрçи, 3-4 хăяр, пуçлă 1 сухан, 2-3 шăл ыхра, типĕ майонезĕ кирлĕ.**

Сухана, ыхрана вĕттĕн турамалла. Çĕрулмие – тăваткалласа, хăяра çурма çаврашкан касмалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Пылпа аçтăрхан мăйăрĕ

**2 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 4 апат кашăкĕ пыл, 1/2 стакан шыв, 1 стакан сахăр, тăвар, ванилин кирлĕ.**

Пылпа сахăр, тăвар, шыв хутăшне çăраличчен пĕçермелле. Çулăма сÿнтерсен мăйăр, ванилин хушмалла. Кăштахран мăйăра хут çине кăларса хумалла.

### Паштет

**Консервланă 1,5 стакан шалча пăрçи, 1/2 стакан сальса соус, 30 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 2 чей кашăкĕ панулми уксусĕ, 1 шăл ыхра, вĕтетнĕ 2 апат кашăкĕ петрушка кирлĕ.**

Мăйăра блендерпа вĕтетмелле, ыхра, сальса, уксус, петрушка, шалча пăрçи хушмалла. Çак хутăш пĕр пеклениччен пăтратмалла.

### Çăра яшка

**400 грамм кавăн, 200 грамм çĕрулми, 100 грамм кишĕр, 100 грамм симĕс сухан, 200 грамм шампиньон, укроп, тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Кавăнпа çĕрулмие, кишĕре тăваткалласа турамалла. Çимĕçсене шывпа пĕçермелле, тăвар, пăрăç хушмалла, блендерпа вĕтетмелле.

Вĕттĕн туранă симĕс суханпа кăмпана тип çупа ăшаламалла. Çак хутăша яшкана ямалла, 5-7 минутран çулăма сÿнтермелле. Сĕтел çине лартиччен çăра яшкана вĕтетнĕ укроппа петрушка хушмалла.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Пуш уйăхĕнчи ĕçсем



Пахчаçăсен, пÿлĕмре чечек ÿстерме кăмăллакансен ку уйăхра хĕрÿ ĕç пуçланать. Калча акмалла, теплицăсенчи çĕре ăшăтса хатĕрлемелле. Чÿрече аниччи помидор, баклажанпа пăрăç калчине асăрхамалла. Ытлашши шăвармалла мар – унсăрăн калча чирлет. Килте çырма хăйăрĕ тытсан аван: çимĕçсен тунисем ан хуралччăр тесен ăна шăварнă хыççăн йывăçăн вĕтетнĕ кăмрăкĕпе хутăштарса тăпра çине сапмалла.

Чечексене те урăх савăта куçармалла, тăприне çĕнетмелле. Геране, бальзамина, фуксие çĕнетмелле.

Сухан типменнине тĕрĕслĕр. Гладиолус, георгин тымарĕсем епле хĕл каçнине те пăхмалла. Вăрлăхлăх çĕрулми хатĕрлесе яровизаци тума хатĕрленмелле.

Уйăх вĕçĕнче улма-çырла йывăççисене касмалла. Çанталăк лайăх тăрсан тĕрлĕ хурт-кăпшанкă тапăннине халех тĕрĕслемелле. Уйрăмах хура хурлăхана сăнамалла, кăчкисене тĕпчемелле.

Йывăççем еплерех хĕл каçнине те тишкермелле. Шăннă е суранланнă вырăн асăрхасан ăна чĕрĕ туни таран шĕвĕр çĕçĕпе хырса тасатмалла, тимĕр е пăхăр купоросĕпе тасатмалла, сăмала е цемент сĕрмелле, полиэтиленпа чĕркемелле.

Кайăксем вĕçсе килнине ан манăр – шăнкăрч йăвисем вырнаçтарăр.

ПĔЛЕС КИЛЕТ

# Мунча йĕпенет

**Иртнĕ çул çĕнĕ мунча хăпартрăмăр. Анчах вăл шал енчен кăвакарма тытăнчĕ. Çакăн сăлтавĕ мĕнре-ши?**

**СВЕТЛАНА П.**
Çĕрпÿ районĕ.

Кирек мĕнле çурт та стена çÿхе пулсан, кăмаки лайăх ĕçлемесен е никĕсе тĕрĕс мар тусан йĕпенет. Ун пек чухне сывлăш чĕрĕ пулать, вăл лайăх куçса çÿреймест. Нÿрĕ стена ăшша япăх тытать, çавна май мунча /е кирек мĕнле хуралтă/ хĕлле кăвакарма пултарать. Унăн ăшши те сахал.

Стена йĕпенсе тăрасси кăмакана тĕрĕс мар вырнаçтарнинчен те килме пултарать. Мунча пурине тĕплĕ тĕрĕслемелле, кирлĕ пулсан стенасене хулăнлатмалла, никĕсе çирĕплетмелле.

# Миçе хăма?

**Çурт хăпартма хатĕрленетпĕр. 1 кубла метра миçе хăма кĕнине пĕлес килет. Унсăрăн строительство материалĕ сутакансем ним мар улталама пултараççĕ.**

**И.ПЕТРОВА.**

Пĕр кубла метра:

6 метрлă хăма: 25х100 – 66 штук, 25х150 – 44 штук, 30х150 – 34 штук, 40х150 – 28 штук, 50х150 – 22 штук, 50х200 – 17 штук, 65х150 – 17 штук;

6 метрлă брус: 150х150 – 7 штук, 150х100 – 11 штук, 100х100 – 17 штук, 50х100 – 33 штук;

6 метрлă ыраллă урай хăми: 38х112 – 39 штук, 38х145 – 30 штук, 45х111 – 33 штук;

6 метрлă ыраллă вагонка: 17х95 – 103 штук, 18х95 – 97 штук, 19х115 – 76 штук, 19х145 – 60 штук.



ШУТА ИЛМЕ

# Шĕпĕне пĕтерме

**Шĕпĕн ерекен чир иккенне чылайăшĕ пĕлмест те. Çын организмĕнче папиллома вирусĕ пуррипе çыхăннă ку. Халăх мелĕ ÿт çинчи мăкăрăлчăксенчен хăтăлма тĕрлĕ меслет сĕнет.**

● Сухана çÿхен касмалла та 6 процентлă уксуса ярса 2 сехет лартмалла. Çывăрма выртас чухне шĕпĕн çине хурса çыхмалла. Суханпа суран тÿрлениччченех усă курмалла.

● Вĕтетнĕ шĕпĕн курăкĕпе вазилин /пĕр тан виçепе/ хутăшне куллен сĕрмелле.

● Хăва кĕлĕпе уксуса пĕр тан виçепе хутăштармалла та шĕпĕне унпа кунне 2-3 хутчен çыхмалла.

● Пилеш çырлине тÿсе мăкăрăлчăка куллен çыхни те витĕмлĕ.

● Банан хуппине тăваткалласа касмалла, çемçе енне ыхра сĕткенĕ тумлатса шĕпĕнсене çыхмалла. Куллен çĕнетмелле.

# Ÿт кăвакарсан

● Ÿт тин çеç кăвакарнă чухне бодяга пулăшать. Аптекăра сутаканскере шывпа хушса чуста çăрмалла, суранланнă вырăна хумалла.

● Аманнă вырăна йодăпа сеткăласа ÿкерни те паха.

● Алоэ çулçине касса çыхни те кăвакарнине ирттерме пулăшать.

● Çапăннă вырăна çийĕнчех шăнтнă петрушка тытсан суран тĕксĕмленсе кăвакармĕ. Çавăнпах шăнтмăшра петрушка упрасан аван.

● Çапса çемçетнĕ купăста çулçи те паха витĕмлĕ.

● Кăвак хăвăртрах ирттĕр тесен сурана уксуспа эрех /пĕрер стакан/, 1 чей кашăкĕ апат соди хутăшĕпе компресс тумалла.

● Пилеш, календула экстракчĕсем, Е витамин, сырлан, шур чăрăш çăвĕсем хушса хатĕрленĕ кремпа усă курмалла.

# Алла çемçетме

1 çăмарта саррине 1-ер апат кашăкĕ тип çупа, пылпа пăтратмалла. Çак хутăша 25 минутлăха алла сĕрмелле. Вăл ÿте нÿрĕтет тата тутлăхлантарать.

Теркăланă 1-2 çĕрулмие ăшă сĕтпе пăтратмалла. 10-15 минутлăха алла çак хутăша чиксе лармалла.



АХ, АНЧАХ...

# Каçармарĕç...

Юратнипе асапланатăп. Çак ыратăва лăплантарма нимĕн те пулăшмасть. Хама ниепле те алла илейместĕп. Çавăнпах «юрату – усал» текен шухăш патнех пырса тухрăм. Арçынсем, ютти патне чупсан та – ан юратăр! Хăвăра çеç асап кӳрĕр.

...Çамрăк чухне хĕрсем хыççăн чупман мар. Такам патне те çитнĕ. Вăрттăн çимĕçе те çамрăклах тутаннă эпĕ. Хамран чылай аслă тантăшăм пĕр хĕрарăм патне мунчана илсе кайнăччĕ. Çавăнтанпа кашни хĕре тенĕ пек çавăрма пуçларăм та. Тĕлĕнмелле те, чупсан-чупсан парăнатчĕçех вĕсем. Катя çеç хăйне сăпайлă тытрĕ. Чуптунинчен ытла çывăха ямарĕ. Тахăш самантра юратрăм ăна. Часах вăл та мана савнине систерме пуçларĕ. Çапла аслă класа вĕренме куçсан та Кĕтерукпа çӳрерĕмĕр эпир. Кăна пĕтĕм ял пĕлчĕ. Çав вăхăтрах хĕре систермесĕр юттисем патне те чупаттăм. Пĕр каçлăх.

Вăхăт хăвăрт шурĕ. Сарă чиперккене ытларах та ытларах саврăм. Часах салтака кайма та ят тухрĕ. Ăсатрĕ мана Катя, анчах кĕтсе илеймерĕ. Çук-ха, кĕтсе илчĕ. Анчах хĕсметрен таврăнсан вăл «пăсăлма» ĕлкĕрнине пĕлтĕм. Кăна хăй мар, çывăх тусăм калани пушшех вĕчĕрхентерчĕ. Çыру та çӳретрĕ-çке савниçĕм. Ăшă сăмахсем шăрçаларĕ. Тунсăхне сирес тесе-ши, çывăх тусăм айне выртнă хăй. Çакна каçараймарăм. Унпа пач хутшăнма пăрахмарăм теместĕп. Каçсерен хушăран çӳрерĕм-ха ун патне. Çемье çавăрасси пирки вара текех ĕмĕтленмерĕм.

Пĕрремĕш юрату хăвачĕ иксĕлми теççĕ. Çук вара, вăйлă çил вĕрсен сĕвĕрĕлет вăл та. Кунсем иртнĕ май эпĕ те Кĕтерука чи хаклă çын пек йышăнма пăрахрăм.

Салтак аттине хывсан вĕренме кĕтĕм. Малтанхиллех хĕр чĕрисене çунтартăм. Хама çав тери чипер тесе те шухăшламастăп, анчах пикесен кăмăлне каяттăм. Пĕр-икĕ ăшă сăмах илтсенех ирĕлме хатĕрччĕ вĕсем. Çапла Танюкăн чĕрине те вырнаçрăм.

Тĕрĕссипе, унпа хамăр ялти клубрах паллашнă-ха. Тăванĕсем патне хăнана килсе çӳретчĕ вăл. Çулла уйрăмах вăрах пурăнатчĕ. Хула ураменче ăнсăртран тĕл пулсан та сăмах чĕнмесĕр иртмен. Çав тери килĕшетчĕ тесе те калаймастăп-ха ун пирки. Ыттисенчен уйрăлса тăратчĕ вăл. Паллă ĕнтĕ, хула хĕрĕ ялтан килнисенчен капăртарах çӳретчĕ. Çинçе пилĕкĕскерне хăть те мĕн тăхăнсан та килĕшетчĕ тата.

Каччăн куçĕ курмасть-им? Çапла чиперлĕхе саврăм та.

Пĕррехинче яла кайма тухсан вокзалта куртăм ăна. Ман чĕреме çакăн чухне çапса аркатрĕ те. Шурă шăлавар тăхăннăскер хăйĕн капкăнне çаклатрĕ. Ун чухне кун пеккине хĕрсем питех тăхăнмастчĕç-ха. Модăна кĕрсе çеç пыратчĕ вăл. Ытла та илĕртӳллĕччĕ хĕр ку тумпа. Çапла шăлавара юратса пăрахрăм. Унпа пĕрлех – Таньăна та.

Çакăн хыççăн ун патне çӳреме тытăнтăм. Усăлса çӳрерĕмĕр, хушăран чей ĕçме хăнана та чĕнчĕ вăл. Часах мана савнине систерме пуçларĕ. Эпĕ те ăна арăм тума упрарăм, çавăнпах пӳрнепе те тĕкĕнмерĕм.

Пĕрре çапла яла кайма пĕрле пуçтарăнтăмăр. Вокзалта тусăма куртăм. Юнашар тăракан хĕрпе паллаштарма ыйтсан ним шухăшсăр шӳтлесе: «Пулас арăм», – терĕм эпĕ. Туй пирки кăсăклансан та: «Часах», – кулса иртертĕм. Паллах, ун чухне пĕрлешесси пирки пачах та шухăшламанччĕ. Çемье çавăрасси пирки те Таньăпа сăмах хускатман. Çамрăк-çке-ха. Çавăнпах ку шӳте те çийĕнчех манса кайрăм.

Савниçĕм вара çакна чăнласах йышăннă курăнать. Эпĕ шӳтленине пачах та тавçарман вăл. Çакна ун патне черетлĕ хутчен хăнана кайсан ăнлантăм. Чей ĕçме чĕнсен яланхиллех турткаланмасăр килĕшрĕм. Ашшĕпе амăшĕ килĕнче пулни те сисчĕвлентермерĕ. Ара, тепĕр тесен, вĕсем пур чухне пĕрремĕш хутчен кĕместĕп-çке. Çапла диван çинче аслисемпе калаçса ларнă хушăра Танюк капашсăр пысăк хыпар пĕлтерчĕ: «Эпир Васçапа пĕрлешесшĕн», – терĕ. Юрать ларттăм. Унсăрăн çавăнтах тӳнсе каймалла. Печчук пиччепе Наçтук аппа куçран тинкерни чĕмсĕрлетрĕ. Ним калама пултараймарăм. Иксĕмĕр çеç юлсан кăна ку мĕне пĕлтернине пĕлме хăтлантăм. «Яла кайнă чухне вокзалта хăвах çапла каларăн-иç», – пулчĕ хурав.

Çапла икĕ çемье туя хатĕрленме пуçларĕ. Часах ăна кĕрлеттерсе те ирттертĕмĕр. Пĕрле пурăнма тытăнтăмăр. Хунямапа хуняçа пулăшнипе хваттер туянтăмăр. Часах Павăл çуралчĕ. Хама çав тери телейлĕ туйрăм. Паллах, ыттисем пекех эпир те хушăран тавлашаттăмăр-хирĕçеттĕмĕр. Çемьере тирĕк-чашăк шăкăртатмасăр пулмасть теççĕ вĕт. Анчах пурăна-киле вăрçăнасси тăтăшланчĕ. Куншăн эпĕ те айăплă-ха. Пĕрлешсен пĕр хушăран ĕçлеме инçетри хулана çӳреме тытăнтăм. Тепĕр чухне çур çул та пулмастăм килте. Çак тапхăрта, паллах, ют хĕрарăм патне çӳремен мар. Пушшех те – ачаранах ясар ӳснĕ темелле. Вăрттăн çимĕçе тутанмасăр нипле те пурăнаймастăм. Арăм кĕвĕçетчĕ. Çакăнтан «вăрçă» пуçланчĕ те. Тепĕр чухне ним çукранах кӳренетчĕ.

Вăхăт иртнĕ май хулара ĕçе вырнаçрăм. Анчах пурпĕр лăпкă пурăнаймарăмăр. Хăнăхнă йăлине пăрахмарĕ Таня – кăштах кая юлса таврăннăшăн та ӳпкелерĕ. Тепĕр тесен, эпĕ те арăма çеç юратма тăрăшмарăм. Вунă çул пĕрле пурăнса туйăм сĕвĕрĕлнĕччĕ ĕнтĕ. Юратман та пулĕ эпĕ ăна. Шурă шăлаварне çеç килĕштернĕ...

Савман çынпа пĕр хваттерте пурăнма çав тери йывăр. Пĕрмай мăкăртатни тарăхтарать. Ĕçĕмре черетпе каçхи дежурствăна юлмаллаччĕ. Тепĕр чухне çĕрлеччен ĕçлеме те тиветчĕ. Хушăран киле каяс килменнипе çак сăлтавсемпе усă кураттăм – хваттере çывăрма çеç таврăнаттăм. Паллах, арăм та тӳрех ĕненместчĕ. Сăлтав тупса ĕçтешĕм патне шăнкăравлатчĕ. Вăл вара хутăма кĕме хăнăхнăччĕ. Тепĕр чухне эпĕ савăнса-алхасса çӳренĕ чухне те сутмастчĕ.

Чун киле туртманнипех савăк уявсенче час-часах пулаттăм. Авланманнисем нумайăнччĕ пирĕн. Хушăран ташă каçне, мунчана çӳретчĕç. Мана та пĕрлех чĕнетчĕç. Чăн та, юлман вĕсенчен. Хам тахçанах авланнине мансах çавăраттăм хĕрсене. Иртĕхсе пурăннине йышăнмаллах. Анчах нимĕн те тăваймăн – юн вĕрет.

Çапла Аньăпа паллашрăм. Малтанах ăна та ыттисем пекех пĕр каçлăх усă курасшăнччĕ. Анчах... юратрăм. Вăхăт иртнĕ май туйăм вĕриленсе те хĕрӳленсе пычĕ. Çапла Анюксăр пурăнайми пулса çитрĕм.

Чиперкке пĕрре курсах кăмăла кайнине те палăртмалла. Хураскер, яштакаскер, сăпайлăскер... Мĕн тери çепĕç те ачаш калаçатчĕ тата! Темле пăрлă чуна та ирĕлтерĕ çав. Тепĕр чухне черчен чечек пек туйăнатчĕ вăл. Вăйлă çил вĕрсен авăнать çеç мар, хуçăлать пекчĕ. Хушăран вара хăйĕн çирĕплĕхне, хастарлăхне кăтартатчĕ. Кун пек чухне ăна нимĕн те хуçмасса ĕненеттĕм.

Кунран кун ытларах та ытларах саврăм ăна. Кашни курмассерен хăйĕн тыткăнне илчĕ вăл. Ун çумĕнче хама çав тери лăпкă та канлĕ, телейлĕ туяттăм. Ытамĕнче ирĕлеттĕм. Чуптуни вара ухмахах кăларатчĕ. Анюка тĕл пулсан çеç чăн-чăн юрату мĕн иккенне пĕлтĕм. Салтакран тасан кĕтсе илеймен Кĕтерук та, саватăп пек туйăнакан шурă йĕмлĕ Танюк та Анюк çывăхне те пыраймарĕç.

Тунсăхлаттăм унсăрăн. Ăна пĕрмай, ялан курас, сассипе киленес, ытамĕнче ачашланас килчĕ. Çакна та каламалла: Аньăна чунран савнă хыççăн ыттисем патне çӳреме пăрахнăччĕ эпĕ. Çавăнпах унпа май пур таран тĕл пулма тăрăшрăм. Вăл та хирĕçлеместчĕ. Савнине, курнăçмасан тунсăх карнине калатчĕ.

Çак вырăнта пурнăçăн юппи патне килсе тухрăм та. Арăмран уйрălса пурнăçăма Анюкпа çыхăнтармаллаччĕ пек. Анчах манран чылай çамрăкскерне шанмарăм. Мана чăннипех юратнине, пурнăçне мана кăна парăнса ирттерме хатĕррине, туйăмсен хĕрӳлĕхĕ сӳнмессе ĕненмерĕм. Тĕрĕсрех, вăхăт иртнĕ май эпĕ Танюка сутнă пек Анюк мана пăрахасран хăрарăм. Савниçĕм тĕрĕссине пĕлсен манпа калаçмасран хăранипех арăмпа уйрăлас ача пирки те нимĕн те каламарăм ăна. Паллах, пурнăçăм кăсăкланатчĕ вăл. Анчах яланах тахçанах уйрăлнине, арăмпа пурăнманнине калаттăм. Тепĕр чухне çеç ывăлăм патне хăнана каятăп имĕш. Ĕненетчĕ вăл. Кашни сăмахăма шанатчĕ.

Эпĕ вара икĕ хĕрарăмран пĕрне суйлама вăй çитерейменĕм. Арăм мана чунран юратнине пĕлсе, вăл хăть те мĕнле пулсан та каçарасса шантăм. Ара, упăшки чупкăн иккенне тахçанах хăнăхнă вăл. Ватлăх кунра та пулин лăпланасса пысăк шанăçпа кĕтет. Анюка та малаллах суйрăм.

Анчах чăнлăх хăçан та пулин çиеле тухатех. Çапла юратăвăм та манăн вăрттăнлăха пĕлчĕ. Суйнине каçараймарĕ.

Вутра çунатăп халĕ. Савнине çухатрăм. Хамах айăплă куншăн. Мăшăрăмпа та – вăрçă. Куншăн явапли те – эпĕ. Малалла мĕн тумаллине пĕлместĕп...

**ВАСИЛИЙ.**

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Манаймастăп

Улттăмĕш класра вĕренеттĕм ун чухне. Пире кашни çулах тĕрлĕ шкула тантăшсемпе паллашма илсе çӳретчĕç. Ун чухне тĕлпулăва Сăкăтри вăтам шкула çитрĕмĕр. Класĕпех пурте пĕрле кайрăмăр унта. Пĕр арçын ачапа уйрăмах туслашрăмăр. Тăтăш çыру çӳретрĕмĕр. Килĕштертĕмĕр пĕр-пĕрне. Хăйĕн сăнӳкерчĕкне те ярса панăччĕ вăл, эпĕ те çаплах хуравларăм. Килсе çӳреме çулĕ çывăх марччĕ. Каярах çыру çӳретме те пăрахрăмăр.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Эпĕ кӳршĕ ял каччипе пĕрлешрĕм. Пурăнсан-пурăнсан районта больницăра куртăм ăна. Пукан çинче ларттăм ун чухне. Ман ума пĕр хитре арçын пырса тăчĕ:

– Аса ил-ха, – терĕ те пăрăнса урама тухса утрĕ.

Шухăша путрăм. Тен, вăл мана чылай малтан асăрханă? Ун хыççăн хамăр ялти лавккара ăнсăртран тепре тĕл пулнăччĕ ăна. Текех курнăçман.

– Ăнсăртран тĕл пултăм эп сана,

Йăлт хускатрăн манăн чунăма, – çуралчĕç ăна курсан сăвă йĕркисем.

Вăл хам пекех ялта пурăнать пулĕ тетĕп. Çирĕп пек туйăнчĕ. Ыррине çеç сунатăп ăна. Çак таса юратăва вара нихăçан та манаймастăп пулĕ. Унтанпа 50 çул та иртнĕ ĕнтĕ, анчах малтанхи юрату асăмрах.

**МАРИЯ.**

Патăрьел районĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Ай-ук...

Пулать вĕт çавнашкал упăшка: арăм айккинелле пăраннă вăхăтра теприн çинчен куç илмест. Ют хĕрарăма ыталама, чуптума хăтланать. Унашкал арçын хăйне патша пекех туять.



Манăн та çавнашкал пĕлĕш пур. Телефонпа шăнкăравлать, тĕл пулма ыйтса халтан ярать. «Юрататăп, сансăр пурăнаймастăп», – унăн ялан пĕр сăмах. Эпĕ çакна вăйă пекех йышăнатăп. «Ай-ук», – хуравлатăп кĕскен. Юрать-ха упăшка çакăн çинчен нимĕн те пĕлмест, унсăрăн иксĕмĕре те ăса вĕрентĕччĕ. Унăн арăмĕ те кăмăлсăр çӳренине асăрхаман. Упăшки йăпанăç шыранине курмасть-сисмест-ши?

Вăт хăпма пĕлмест манран. Йăлăхтарса çитерчĕ – пурпĕрех унпа кафене те, хваттере те каймăп. Чечек çыххи те, ылтăн эреш те кирлĕ мар. Юлашкинчен телефон номерне те улăштартăм – шăнкăравласа ан чăрмантартăр.

Халĕ чăнах та тахçантанпах хутшăнман унпа. Ман çинчен манса та кайрĕ пулĕ. Çакăншăн савăнатăп çеç.

Нумаях пулмасть ăна лавкка умĕнче куртăм. Унта та пулсан пĕр хĕрарăм çине ăшшăн пăхса тăрать.

Унăн арăмĕпе çыхăнăва татман. «Упăшку айккине чупмасть-и?» – ыйтрăм пĕрре шахвăртса. «Мансăр пусне кама кирлĕ ĕнтĕ вăл?» – терĕ юлташăм. Апла тăк кĕвĕçсе тарăхмасть вăл. Унтан упăшки çемьешĕн тăрăшни çинчен каласа кăтартрĕ. Кил хуçи çине тăнипех хуçалăха юсаса йĕркене кĕртнĕ. Çĕнĕ машина туяннă. Малашне те лăпкăлăх хуçалантăрччĕ çак килте. Çăмăл шухăшлă хĕрарăмсемпе ан çыхлантăрччĕ çав арçын.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

И.ЕРОФЕЕВ

# Командировка



Юратрăм, чăнах та юратрăм... Хамăр ялти Микуç тетесем патне хуларан хăнана килнĕ хĕре пĕрре курсах юратрăм. Ячĕ те кăмăла кайрĕ. Паша. Ăна хамăн мăшăр тума та шухăш çуралчĕ. Унпа çемье чăмăртасан туй валли нумаях та тăкакланма кирлĕ мар. Аллисенчи пӳрнисенче çурринче ытла ылтăн çĕрĕсем йăлтăртатса куçа çиеççĕ. Кулнă чухне те çăварĕнчи хаклă чултан тутарнă виçĕ шăлне кăтартать те, тĕнчери пĕтĕм илемлĕхе турă йăлтах ăна парнеленĕн туйăнать. Çитменнине, мана калаçма та хăех вĕрентрĕ.

– Çумăнта ларакан хĕре юрататăн пулсан ăна «юратăвăм, чĕкеçĕм, пăрчăканăм» теме ан ман, – тенĕччĕ çуллахи ăшă каççенче пĕрле ирччененех ларнă самантсенче.

Çапла канлĕхе çухатрăм эпĕ...

Пĕр-икĕ çул курнăçса пурăннă хыççăн:

– Мана качча тухатăн-и? – теме хăйрăм чĕкеçĕме чуп туса.

Паша ман шухăшпа килĕшрĕ.

– Епле-ха санăн юратнă мăшăру пулас мар, сирĕн килçуртăр та килĕшет мана, – терĕ пӳртĕн эрешлесе илемлетсе тунă чӳречесем çине ылтăн çĕрĕ тăхăннă пӳрнипе тĕллесе кăтартса.

Чăнах та, ман атте, ăста платник, çурт сăн-питне çын кăмăлне каймалла илемлетсе тунăччĕ.

– Хальтерех туй туса пĕрлешмесен урăх каччă тупма пултаратăп, – асăрхаттарса хучĕ пике.

Унпа çывăх вăхăтрах туй туса мăшăрлă пулса тăтăмăр.

Анчах килĕшекен çурт та Пашăшăн темшĕн хăвăртах тăварланчĕ. Мана хистесех аттепе аннерен асаттепе асанне çуртне уйăрлса тухса пурăнма ӳкĕте кĕртрĕ. Эпир вара асаннене аттепе анне патне пурăнма илсе килсе хамăр ун пӳртне куçрăмăр.

Унта пирĕншĕн чăн-чăн чап уйăхĕ пуçланчĕ. Маншăн çеç кулленхи пурнăçра ĕç нумайланчĕ. Эпĕ кашни кунах виçĕ хутчен анне пĕçернĕ апата илме киле кайса килеттĕм. Унсăр пуçне чашăк-тирĕке çăвасси те мана куçрĕ. Темшĕн Паша анне пĕçернĕ апата кăмăлларах паратчĕ. Хăй пĕçернине вара пачах та юратмастчĕ.

Мĕнле шăкăл-шăкăл пурăнсан та çĕнĕлĕхсем пурнăçра тупăнаççĕ, шухăша яраççĕ. Паша район центрне ĕçе вырнаçас ĕмĕтпе çунатланчĕ. Эпĕ ялта кăштах ĕçлесе илнĕ укçа уншăн сахал пек туйăнчĕ пулас. Хĕрарăм шухăшне хирĕçлеме хăнăхманскер, эпĕ унпа килĕшрĕм. Çапла мăшăрăм ирсерен килтен тухса çӳреме пуçларĕ. Çул укçи, паллах, ман кĕсьерен кăларса пама тиветчĕ.

Пĕр кунхине Паша киле каçа хирĕç çеç таврăнчĕ те: «Паян эпĕ ĕçе вырнаçрăм, халĕ киле эрне вĕçĕнче çеç килме пултаратăп», – терĕ çурхи хĕвел пек ăшă кулăпа йăл-йăл çиçсе.

Кун хыççăн кун шăвать. Паша райцентра ĕçе вырнаçни çур çул та иртсе кайрĕ. Апла пулин те вăл хăйĕн шалăвне пĕр пус та килсе кăтартмарĕ.

– Ĕçе çӳретĕн, сан ĕç укçи ăçта-ха? – тетĕп пĕррехинче.

– Халĕ çĕршывра кризис, пире ĕç укçи параймаççĕ, тен, пухăнса пырсан каярах эпир санпа çăмăл машина туянăпăр, – йăпатрĕ мана хайхи.

Вăл кулленех ĕçе тунтикун ирех тухса каятчĕ те шăматкун каçа хирĕç çăмăл машинăпа килсе яратчĕç ăна. Пĕррехинче вара эрне вĕçĕнче те килмерĕ.

Вырсарникун ирпе çеç çăмăл машина кăшкăртни илтĕнчĕ. Эпĕ чӳречерен пăхрăм. Пирĕн пӳрт умне чарăннăскертен ман Паша тухрĕ. Сăрланмалли хатĕр-хĕтĕрне чиксе çӳрекен сумкине çĕре хурса хаклă тиртен çĕленĕ калпакне тӳрлетрĕ те машинăн шофер ларакан енне пырса ура çинче тăракан тĕреклĕ арçынна майĕнчен уртăнса чуп турĕ. Унтан вырăнтан хускалнă «таксиста» алă сулса ăсатса ячĕ.

Çакна курнăскер манăн ăшчикĕм пăтранса кайрĕ, çанçурăмра вăй-хал пĕтнине туйса илтĕм. Çапах та эрнере пĕрре киле таврăнакан мăшăрăмшăн тунсăхланипе сăмах чĕнмерĕм. Паша вара маншăн тунсăхланине палăртмарĕ. Вăхăт малаллах шурĕ.

...Мĕн амакĕ! Ман Паша паян эрне варринчех килчĕ. Кăнтăрлах тата. Салтăнчĕ те тӳрех сĕтел çинчи çатмапа ăшаланă пулла ура çинчех çиме пикенчĕ. Хырăмĕ выçнă пулас. Умне пĕр курка сĕт лартса патăм та малалла сăнарăм мăшăрăма. Унăн тепĕр ылтăн çĕрĕ хушăннă-мĕн. Çаплах нимĕн те шарламарăм-ха.

– Ăçта пуçтарăнатăн капла? – ыйтрăм шăппăн.

– Мана ĕçрен командировкăна яраççĕ. Паян райцентра çитмелле. Ялта машинăллисем пулĕ, кайса калаç та леççе яр, – терĕ çирĕппĕн. – Тата укça та кирлĕ мана.

Часах эпĕ пур-çук кĕмĕле йăлтах сĕтел çине пырса хутăм. Унтан кĕсье телефонĕпе юлташăм патне шăнкăравларăм. Тепĕр çур сехетрен Сантăр пирĕн пӳрт умне çитсе те ларчĕ. Машинăна курсанах мăшăрăм урама чупса тухрĕ. Эпĕ ăна:

– Чипер кай, йĕркеллĕ çӳре, – теме çеç ĕлкĕртĕм. Машина асфальтлă çулпа инçе-инçе кайса курăнми пулчĕ.

Пӳрте кĕрсен сĕтел çинче 50 тата 10 пуслăххисем выртнине куртăм. Паша йăлтах илмен иккен, ман валли те кăштах хăварнă. Хам çапах та пăшăрханмарăм. Ялта пикеннĕ ĕç пур, ăна вĕçлесен хуçасем парĕç-ха.

Çанталăк тӳлек чухне чунра ирĕк. Командировкăна кайнă арăмран виçĕ эрне нимĕнле хыпар та çукки çеç чунăма пусарчĕ. Юрать-ха аннем кунсерен сывлăх пĕлмелле тесе килсе калаçса ларать. Çапах та епле пулсан та мăшăр – мăшăрах, яланах вăл чун ăшши пулмалла. Пĕр кунхине чунăм кичемлĕх серепинчен вĕçерĕнчĕ пек туйрăм хама.

Ирхи апат çинĕ хыççăн эпĕ те, арăм командировкăра тесе, Чĕмпĕр тăрăхĕнчи тусăм патне çитсе килес ĕмĕтпе çула пуçтарăнтăм.

/Вĕçĕ çитес номерте/.

## САВĂ СĔВЕМĔ

Зоя СЫВЛĂМПИ

### Шанатăп-ха ырра...

Кула-кула вылярĕ пулмалла
Телей тени манпа пытанмалла...
Кунта вăл килнĕ пулĕ – эпĕ çук,
Пулмарĕ вăл та эп шыранă чух...

Çамрăклăхра, тен, юлнă пытанса,
Çакна тин илтĕм эпĕ ăнланса.
Пуçне усман хăюллă çын кăна
Илейĕ пулĕ, тен, кĕтсе ăна.

Чăнах, ăçта çӳрет-ши çав тивлет?
Ăна халь питĕ ман курас килет.
Ав ывăнтăм пĕрмай шыра-шыра,
Çапах та хам шанатăп-ха ырра...

Пĕлетĕп эп: пачах та ăнсăртран
Телей тени ал сулĕ-ха сăртран,
Хавхаланса вара çине-çине
Пулса вăл çумăр çăвĕ ман çине!

### Ах, тăванăм, тăван

Пурнăç тĕсĕ пулать тĕрлĕрен:
Шутсăр сăрă е çутă кĕрен...
Пурăнсассăн аван тăванпа
Ăнăçу туслă пулĕ санпа...

*Хушса юрламалли:*
Ах, тăванăм, тăван хакласан
Ялан ăшă сăмах каласан,
Çĕр çинче пурăнассăм килет,
Çакă мар-и-ха çутă тивлет?

Пысăк мул вăл – хисеплĕ тăван...
Вăл пачах пулмасан – мĕн тăван?
Нумаййи те, тăванăм, пĕтет,
Пурăнма пĕлнине мĕн çитет?

*Хушса юрламалли.*

Эсĕ маншăн, тăван – чи хакли!
Ăраскалăн хĕлхемĕ, палли!
Ырă суннăшăн вĕçĕм мана,
Чĕререн тав тăватăп сана!

*Хушса юрламалли.*

### Сарă лили

Аякран вĕрсессĕн çилĕ
Чарăнми, çине-çине,
Пахчари сап-сарă лили
Именсе усать пуçне...

*Хушса юрламалли:*
Ак, савниçĕм, каç та килĕ
Тух вара пĕве хĕрне.
Эп сана парнелĕп лили
Сăну евĕр хитрине...

Хуп-хура чĕкеç шатриллĕ
/Çавăнпа-ши вăтанать?/
Пурпĕр питĕ илĕртӳллĕ –
Ытарма та çук ăна...

Çак çӳхе кĕпеллĕ лили
Ас илтерĕ сар хĕре.
Пултăрах чĕкеç шатриллĕ –
Вăл кун пек илемлĕрех...



## КИВЕЛМЕН ЮРĂСЕМ

### Мускав çывăхĕнчи каççем

*Кĕвви В.Соловьев-Седойăн Сăвви М.Матусовскин*

Илтĕнмест садра сас-чӳ çуйăхĕ,
Шăпланать тавралăх ирччен.
Пĕлейсемччĕ эс Мускав тăрăхĕн
Каçĕсем чи хакли çинчен.

Уйăх кĕмĕлĕ çутатать тӳлек
Юханшыв питне ку хутра.
Илтĕнет те пек, илтĕнмест те пек
Çепĕç юрă каçхи шăплăхра.

Каласам, савни, куçна ма тартан?
Ма пуçна усатăн час-час?
Чĕрене усма çăмăл мар шалтан, –
Мĕн сăмах хушса йăпатас?

Майĕпен тавра çутăлса килет,
Тусăм, эс ан ман вĕсене,
Аса ил ялан чи малтанхилле
Мускав çывăхĕнчи каççене.

### Çун, ялтăра, ман çутă çăлтăр

*Кĕвви П.Булаховăн Сăвви В.Чуевскин*

Çун, ялтăра, ман çутă çăлтăр,
Юратупа хĕмленнĕскер!
Çӳл тӳпере эс йăлтăр-йăлтăр
Пĕчченçĕ çеç çунан çаккер! –
Çӳл тӳпере эс йăлтăр-йăлтăр
Пĕчченçĕ çеç çунан çаккер!

Юратура асамлă çăлтăрăм,
Кайри кунсен çутăраххи!
Эс ĕмĕр-ĕмĕр асăмра тăрăн,
Асап чуна чи çывăххи!
Эс ĕмĕр-ĕмĕр асăмра тăрăн,
Асап чуна чи çывăххи!

Çӳл тӳпере хĕлхемӳ çуттăн сан
Çутатĕ ман кун-çулăма;
Енчен сасартăк эп вилсе кайсан
Çутат эс манăн тăпрама!
Енчен сасартăк эп вилсе кайсан
Çутат эс манăн тăпрама!

### Хура хӳхĕм куç

*Кĕвви халăхăн Сăвви Е.Гребенюкăн*

Хура çăлтăр-куç, ытарма çук куç!
Пĕçертсе çунан, хура хӳхĕм куç!
Илĕртетĕн эс! Хăрататăн эс!
Ырра мар-тăр ку, ĕненес килмест!

Пăралатăн эс ахаль мар хуран,
Тен, санра та пур чĕрери суран.
Сан куçу çиçет кăварне тăкса,
Ман айван чĕре кĕлленет çунса.

Кулянмастăп эп, салху мар çапах,
Килĕшет мана çăмăл мар шăпах.
Çырлахар, эппин, Турă панипе,
Савăнатăп эп сана курнипе!

Хура çăлтăр-куç, ытарма çук куç!
Пĕçертсе çунан, хура хӳхĕм куç!
Илĕртетĕн эс! Хăрататăн эс!
Ырра мар-тăр ку, ĕненес килмест!

А.ЮМАН куçарнă.

# Людмила Нарусова – мăшăрĕ çинчен

**Петербург хăйĕн пĕрремĕш мэрне Анатолий Собчака ĕмĕрлĕхех çухатнă-ранпа нарăс уйăхĕнче 15 çул çитнĕ. Çавна май арçыннăн тăлăха юлнă арăмĕ мăшăрĕн юлашки кĕнекин – "Сталин. Личное дело" – презентацине ирттернĕ.**
**Собчак 2000 çулхи нарăс уйăхĕнче панă юлашки интервью сыхланса юлнă. Унта вăл шăпах çак ĕç çинчен каласа кăтартать. Сахалтан та тата çур çул ĕçлеме палăртнă вăл алçырăвĕпе. Палăртни пурнăçланман. Интервью хыççăн экс-мэр юлашки командировкăна Калининграда çула тухнă. Текех таврăнайман.**

**Людмила Нарусова кĕнекери шăллă вырăнсене çемçетмен. Çак ĕç пирки алă çупса тав тăвакан та, сурчăк сирпĕтсе тавлашакан та пулнă. Сурчăк ытла та сирпĕннĕрен хурал хăшне-пĕрне Нева хĕрринчи Культурăпа вулав паркĕнче иртнĕ презентацирен кăларса та ярасшăн пулнă. Нарусова хирĕçленĕ. "Çын çапла шухăшлать. Унăн пуç мимине улăштараймăпăр эпир, шеллеме кăна пултаратпăр".**



## Кĕнеке çурални

– Малтанхи пилĕк çул унăн çыру сĕтелĕ çывăхне те пыман эпĕ, – каласа кăтартать Людмила Борисовна. – Хутсем çине пăхма та пултараймас-тăм. Каярахпа кăна архивĕнче чакаланма пуçларăм. Тӳрех ыйту çуралчĕ. Чăн-чăн демократ, антисталинист мĕншĕн-ха шăпах çак ыйтăва хускатнă? Кĕнеке те халалланă ăна авă... Алĕçне вулама пуçласан çӳçенсе кайрăм – ренессанс тапхăрĕ пуçланасса, халăх çирĕп алăшăн тунсăхлама пуçласса ăçтан сисме пултарнă вăл? Çук, айăпсăр шар курнисене мар, шăпах сталинизма хăйне реабилитацилеме пуçласса?.. Ман шухăшпа, вăл: "Çынсем, асăрханулла пулăр!" – тесе каласшăн пулнă.

Собчак хăй умне Сталин сăнарне уçмашкăн тĕллев лартни куçкĕрет – ăс-тăнĕ питĕ çивĕчех аталанман çын мĕнле майпа большевиксен пысăк пайне, лайăх пĕлӳ илнисене те, путлантарма пултарнă? Çĕршыв ертӳçи пулса тăнă. Темĕн пысăкăш патшалăх ăна пуç çапнă, çапăçăва унăн ячĕпе кĕнĕ. Яваплăха тӳрех хам çине илме хăрарăм-ха, çавăнпа Сталин тапхăрне нумай тĕпченĕ Эдвард Радзинскипе канашларăм. Алçырăвĕ те пиçсе çитменччĕ-ха... Вăл вара ниме пăхмасăр пичетлеме сĕнчĕ: "Ăслăлăх ĕçĕ мар вĕт ку. Политика памфлечĕ. Иртни ан таврăнтăр тесессĕн ăна асран кăлармалла марри пирки".

Сталинграда ятне таврăс шухăш çурални те çак ĕçе кун çути кăтартма хистерĕ. Мĕн тăватпăр эпир? Хулана миллион-миллион çын пурнăçне татнă ятпа çыхăнтаратпăр-и? Сталина час-часах Гитлерпа танлаштарасçĕ. Анчах та Гитлер хăйĕн халăхне пĕтермен вĕт. Пирĕн çĕршыва кӳнĕ усал вара хăй айăпсăр тăрса юлнă. Çапла, Мавзолейран илсе тухнă ăна. Çапах та вăл тытса пынă политикăна патшалăх шайĕнче сивлени пулман-ха. Собчак Ельцина сталинизм тĕлĕшпе хăйне май "Нюрнберг" иртерме сĕннĕ. Ельцин çапла туma хăюлăх çитереймен. Тен, халăхăн çав вăхăтри шухăшлавне шута илсе вăл тĕрĕс те тунă.

Собчак тоталитаризм генезисне тишкернĕ. Мĕншĕн эпир хамăра сĕнекен пур шухăша та тӳрех ырласа йышăнатпăр? Пĕр шухăшсăр пăхăнасси пирĕн пуçра мĕнле аталанать-ха? Мĕншĕн çарăн пултаруллă ертӳçисене пĕтернĕ чух никам та хирĕçлемен? Тухачевский, Уборевич... Çавна пула мар-и 41-мĕш çул тĕлне пирĕн çар вăйсăрланса юлнă? Хресченсем тата? Вĕсен чи ĕçчен пайне пĕтернĕ вĕт. Халĕ акă эпир хамăра тăрантарай-мастпăр, ял хуçалăхĕ арканни пирки калаçатпăр. Усал тымарне йăлтах иртнĕлĕхре шырамалла.

## Политика курăмĕ

Собчак вăхăтпа тан пынă, анчах та юрама пĕлмен. 1989 çулта вăл Тбилисире иртнĕ мирлĕ демонстрацие салатнине тĕпчекен парламент комиссине ертсе пынă. Газпа тата сапер кĕреçипе усă курни çиеле тухнă. Пĕрремĕш тăшманĕсене вăл çавăн чухне тупнă та. Çар çыннисем ăна "патриот мар" тесе айăпланă – совет салтакĕсене хурлать имĕш, вĕсен умне лартнă тĕллевсене ăнланмасть. Ун чухне Собчак çапла каланă: "Тĕрĕслĕхĕн национальноç çук. Манăн тĕллев – тĕрĕслĕхе тупса палăртасси". Çапла, диагноз тепĕр чух кăмăллах мар пуль, анчах та унсăрăн чире сиплеме çук.

Тепĕр чухне манран Собчак паян пурăннă тăк хăш парти политикине тытса пырасса ыйтаççĕ. Çакна калама пултаратăп. Право йĕркинчен паян та иртмĕччĕ вăл. Саккуна пăхăнса ĕçлĕччĕ. Унăн вĕçлеймен тепĕр ĕçĕнче – "Советник трех президентов" – шăпах çакă палăрать. Паянхи партисенчен нихăшне те кĕместчĕ пулĕ тесе шухăшлатăп. Вăл хăй те çапла калатчĕ: "Эпĕ сулахайăи те, сылтăмми те мар".

## Мэр пуканĕ

Аслă Канашра ĕçлени унăн çăлтăрлă сехетех çаврăнчĕ. "Аргументы и факты" политиксен рейтингне пичетленĕччĕ, пĕрремĕш вырăн унта Собчак йышăннăччĕ, ун хыççăн Ленин, вара Ельцин. Ту тăррине хăпарса çитсен çын пĕр кĕтмен çĕртен регион шайне анать... Çакна вăл чунпах пурнăçларĕ. Тăван Петербурга вăл ачи пекех юрататчĕ, тинĕс тата халăхсен хушшинчи портсем пуррине шута илсе кунта экономика ирĕклĕ зонине йĕркелесшĕнччĕ. Çав плана йышăннă тăк эпир 5 çултан Гонконга çавăрнаттăмăр. Анчах та Мускав Собчак татах вăй илессинчен шикленчĕ. Халĕ вара çакăн евĕр зона е Крымра, е Находкăра йĕркелесшĕнни пирки илтетпĕр...



Унăн инкекĕ – анлă шухăшлавĕ тата çынна шаннинче. Вышкайсăр пысăк ыйтусене татса пани çавăнпах чаршав хыçне юлать те. Апат-çимĕç карточкисене, сăмах май, çамрăксем вĕсем пирки пĕлмеççĕ те, шăпах пирĕн хулара чи малтан пăрахăçланă вĕт. 1996 çул тĕлне Петербургра ĕçсĕрлĕх чи пĕчĕк шайĕ пулнă. Çав çулсенчех хулана томограф тата медицина çĕнĕ технологийĕллĕ оборудованине илсе килнĕ. 1991-92 çулсенче хула çăкăрсăр тăрса юлас хăрушлăх пурччĕ. Собчак хăй Германи канцлерĕ, Франци президенчĕ патне шăнкăравлатчĕ, Швецирен, Англирен пулăшу ыйтатчĕ. Çăнăх, пăшăхланă какай кӳрсе килнĕ пăрахутсем патне хăй каятчĕ – вăрласа пĕтересрен асăрхама. Кайран хитре тумлана пулăшу кӳнĕ çĕршывсен посольствисене çул тытатчĕ – тав тума. Пиар технологийĕсене кăмăлламастчĕ. Хĕрлĕ хăюсем те касса çӳреместчĕ. Хулара мĕн пулса иртнине çынсем каплах та ăнланасса шанатчĕ. Çав вăхăтра унăн ĕçтешĕ, Мускав мэрĕ, кепка тăхăннăскер, экрансем çинчен каймастчĕ. Çапла вара пĕрремĕшĕ нимĕн те ĕçлемест, иккĕмĕшĕ хуçалăх ыйтăвĕсене татса парать пулса тухатчĕ. Çапла, Собчак культура ыйтăвĕсемпе те нумай ĕçлетчĕ. Анчах та туризма аталантарсси пĕлтерĕшлĕ пулнине пирĕн халĕ кăна ăнланса илчĕç.

## Хушамат вăрттăнлăхĕ

1996 çулхи суйлавра Анатолийĕн чăн хушамачĕ пачах та урăхла тесе ĕнентерме тăрăшрĕç çынсене. Собчак – унăн арăмĕн хушамачĕ-мĕн. Çак нафталина паян та пăтратаççĕ. Тĕрĕссипе, Собчак, пусăм сăмахăн пĕрремĕш сыпăкĕ çине ӳкет – Собчак, шляхтич, поляк хушамачĕ. Упăшкан мăн аслашшĕ Санкт-Петербургра çул-йĕр институтĕнче вĕреннĕ хăй вăхăтĕнче. Гитлер 1939 çулта Польшăна кĕнĕ. Çĕршывра поляксене талăк хушшинче Çĕпĕре кăларса яма директива тухнă. Çемье çав вăхăтра Ташкентра пурăннă, хунеçе чукун çул инженерĕнче тăрăшнă. Кӳршĕре пурăнакан узбек, пысăк вырăнта ĕçлекенскер, çăлса хăварнă. "Акă Сталин хушăвĕ, – тенĕ вăл. – Манăн пурне те кăларса ямалла. Анчах та манăн таса темиçе бланк пур – эпĕ паспорт çине сире вырăс тесе палăртма пултаратăп". Çапла Собчак хушаматра пусăм хыçалти сыпăк çине куçнă. Акă вăл – хушаматпа çыхăннă хăрушă вăрттăнлăх. Шăпах çакна пытарнă пулĕ мэр хăйĕн суйлавçисенчен.

## Шăмă çинче

Кремль архивĕпе ĕçленĕ чухне вăл Ленин мумине Мавзолейра тытса тăмашкăн мĕн чухлă тăкакланнипе кăсăкланчĕ. Ăна биологи тĕлĕшпе питĕ лайăх тирпейленĕ – чĕрнисем халĕ те ӳсеççĕ вĕт. Улшăнусене сăнасах тăракан специалистсен ятарлă штатне тытса тăраççĕ. Собчакăн юлашки сăмахĕсенчен пĕри Ленин кĕлеткине пытарассипе çыхăннăччĕ. Çапах та эпир православи тĕнне пăхăнатпăр-çке. Пирĕн тĕнпе килĕшӳллĕн вара кĕлеткене пытарманни çылăх шутланать. Пушшех те, вилсен амăшĕпе тата йăмăкĕпе юнашар пытарма Владимир Ильич хăй ыйтнă. Ун чухне нумайăшĕ хĕремеслenсех тавлашнăччĕ. Халĕ мĕн куратпăр-ха? Хĕрлĕ тӳремпе Мавзолей таврашĕнче хĕлле – каток, çулла рок-концерт, фестиваль... Шăмăсем çинче ташласа юрлатпăр эпир... Ĕмĕрлĕх канăç тупнă чуна вара лăпкăлăх кирлĕ.

## Петербург

Пирĕн хулана I Петĕр ячĕпе хунă теççĕ. Тĕрĕс мар ку. Çапла, Петĕр, анчах та патша мар – светтуй ячĕпе. Хулан пĕрремĕш чулне те 1703 çулхи çу уйăхĕнче светтуй Петĕр кунĕнче хывнă. Сăмах май, çăтмах уççи шăпах Петĕрте теççĕ. Хула ятне улăштарас ыйту çĕкленсен эпир пурăнакан çурт тавра усал сăн-питлĕ хĕрарăмсемпе арçынсен ушкăнĕ пуçтарăннăччĕ. Хăйсем "Вихри враждебные" юрлаççĕ, Собчака Гитлерпа танлаштараççĕ... Гитлер Ленинграда çĕр питĕнчен çухатасшăн пулнă, Собчак та çавах... Çав вăхăтрах шăпах Собчак пуçарăвĕпе килĕшӳллĕн блокадниксене вăрçă ветеранĕсемпе танлаштарчĕç, шăпах Собчак патшалăх программисене кĕтсе тăмасăр вĕсене хваттерсемпе тивĕçтерме пуçларĕ...

...СССР пĕрремĕш референдумĕ шăпах пирĕн хулара иртрĕ. Мэр суйлавĕпе тӳр килчĕ вăл. Собчак вара ун чухне çапла каларĕ: "Хула ятне çынсем хăйсем суйлаччăр. Анчах та Петербург мэрĕ пулма хирĕç мар эпĕ, Ленинградăн вара – çук". Политика картти çине вăл çав самантра хăйĕн шăпине кăларса хунине ăнланнă-ши? Пĕр кĕтмен çĕртен II Алексий патриарх пирĕн майлă пулчĕ. Светтуй Петĕр хулине Ленин ячĕпе çыхăнтарса идеологи арчине чиксе хуни пирки çырчĕ вăл. Тĕне кĕртнĕ чух панă ята йышăнманни çыншăн – çылăх. Хулашăн та малтанхи ятне таврăнманни çылăхпах танлашнине палăртрĕ вăл. Çĕнĕ пурнăç пуçлантăр тесен пуçламăшне таврăнмаллине палăртрĕ. Америкăран Иосиф Бродский сăввине ярса пачĕ. Ленинградра çуралнă пулсан та Санкт-Петербургра вилес килнине палăртнă вăл. Çапла 54 процент пуçтарăнчĕ. Суйлав кăтартăвĕсене улăштарасси ун чухне асра та пулман.

## Пĕрлешес тесен

Пĕрлешес, çĕнĕ çĕршыв йĕркелес тесен мĕн тумалла? Унта ĕçе кура хаклаччăр, çынсене хисеплеччĕр... Чи малтанах, шухăшлама вĕрентмелле. Лайăх кĕнекесем вуламалла. Çын пумалла. Ушкăн хыççăн кайса пĕтĕмлетӳ тăваканни мар, хăйĕн пуçĕпе шухăшласа пурăнаканни. "Хăйĕн шухăшлама вĕреннĕ халăх хăйĕн пуласлăхне ыттисене татса пама ирĕк памастех", – Герценăн çак сăмахĕсене кĕнеке эпиграфĕ вырăнне вырнаçтартăм. Собчака халĕ те юлташĕсем ырăпа аса илеççĕ, тăшманĕсем – кураймасăр. Апла тăк вăл халĕ те пирĕнпе юнашарах.

/"russianlook.com"/.



## ☺И-ХИ-ХИК☺

– Ăмăрткайăкăм, мана сана Турă хăй панă вĕт?

– Çапла. Çакна кăна ăнланаймастăп – мĕн туса çав таран çылăха кĕнĕ-ши эпĕ?

* * *

Эпĕ ĕçлекен çĕре аппа пырса кайнă хыççăн мана пуçлăх та хисеплеме пуçларĕ.

– ???

– Аппа прокуратурăра ĕçлет. Ман пата ĕçе формăпа пычĕ. Ăна кашни пӳлĕме илсе кĕрсе кăтартса çӳрерĕм. Сăмах май – пуçлăх патне те. Паллаштартăм. "Пĕрре те ларман-ха, – терĕм. – Хальлĕхе..."

* * *

Кам хăрушăрах: ăслă тăшман-и е чее тус-и?

* * *

– Калăр-ха: кама ултталама йывăртарах? – ыйтаççĕ пасарта сутуçăран.

– Тепĕр сутуçа, – нумай кĕттермест хурав.

* * *

– Сивĕ... Шăнтăм пăртак... Ăшăнасчĕ...

– Ара, кăмака хутса яр...

– Эпĕ сана кăшт систересшĕнччĕ...

– Ăнлантăм. Ухмах мар. Кăмакана манăн чĕртмелле...

* * *

Эрне варринче ачана садике кайма ирех вăрататăн. Канмалли кун сана вăл çакăншăн тавăрать...

* * *

– Интеллигент кам вăл?

– Ну, пĕрремĕшĕнчен, аслă пĕлӳллĕ çын. Иккĕмĕшĕнчен, унăн пуçĕ вăтам шайра та пулин ĕçлемелле. Виççĕмĕшĕнчен, унăн пуçламăш шайра та пулин воспитани илмелле.

* * *

Паян пăр çине ярăнма кайрăм. Малтан конькипе ярăнтăм, унтан – чĕркуççипе, кайран – питпе... Халĕ "Васкавлă пулăшупа". Хускану – пурнăç!

* * *

Паспорта уçса пăхрăм... Турăçăм! 50 çул! Унтан тĕкĕр патне пытăм. Эй, шикленмеллиех çук, 25-ре кăна-ха. Чунпа каласрăм... Йăлтах йĕркеллĕ – 18!!!

* * *

Карчăк старикки Виагра тӳммине тăвата пая каснине асăрхать.

– Мĕн тăватăн эсĕ? Ăна йăлтах ĕçмелле!

– Тен, эпĕ сана чуптăвасшăн кăна?..

* * *

Упăшкан телефонне тĕрĕслеме пуçларăм та "Тӳлевсĕр савăшу" текен контакт тупрăм. Мĕн япала ку? Кăсăкланса – мĕн пулать те мĕн килет! – хайхи номерпе шăнкăравларăм. Мĕн тетĕр? Хамăн телефон сас пачĕ. Вăт эсремет арçынни!

* * *

– Кăçал канма ăçта кайăпăр?

– Пĕлетĕн-и, чунăм, пирĕн шалăва кура... эпир пачах та ывăнман пек туйăнать...




* * *

Пĕлтерӳ. Опытлă детектив. Сирĕн мăшăр хăйне мĕншĕн çапла телейлĕ туйнине туххăмрах тупса палăртать.

* * *

– Хм... Ăмăрткайăкăм, манăн велотренажер ăçта вара?

– Ăçта... ăçта... Ăçта пултăр – петĕм кăларса! Авăсатăн-авăсатăн, эсĕ таçта кайнăнах туйăнать. Хăв вара ниепле те каймастăн!

* * *

Хĕрарăм килне каçа юлса тата сыпкаласа таврăннă.

– Ăçта çӳрерĕн çак таранччен?! – арăмĕн сăмси умĕнче будильникпа сулкалать арçын.

– Ан кăшкăр, – тет хĕрарăм. – Унсăрăн тепрехинче календарьпе сулкалама тивĕ...

* * *

Самаях сыпнă арçын майĕпен пулин те килнеллех шăвать. Куккук авăтни илтĕнсе каять.

– Куккук! Куккук! Каласамччĕ: миçе çул пурăнатăп эпĕ? – хăнăхнă йăлапа кăшкăрать арçын.

– Тепĕр 5-7 çеккунт! – илтĕнсе каять балкон çинчен арăмĕн сасси. – Эпĕ урама тухиччен.





## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**65.КРС** – коров, бычков, **тёлок; лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**66. КРС – коров, бычков, тёлок;** лошадей. Т. 8-961-345-05-28.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007.*
*Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-960-307-31-51.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-960-307-31-51.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.

**17.Песок, гравмассу,** керамзит, **чернозем, навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 8-906-381-44-20.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозем. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.



## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Пуç лĕкĕленсен



**Пуç лĕкĕленни çӳçе илемсĕрлетет. Клеткăсем хупланнăран пуç сывламасть, çавăнпах çӳç тымарĕсем вăйсăрланаççĕ. Лĕкке пĕтерме халăх мелĕсем те пулăшаççĕ.**

● Пуçа çунă хыççăн ăна пĕр-икĕ минут чей кăмпин шывĕпе сăтăрмалла.

● Маска хатĕрлеме пулать: кастора çуне, эрехе тата çăра чее пĕрер апат кашăкĕ хутăштарса пуçа сĕрмелле, 2-3 сехет тытмалла. Маскăна эрнере 2-3 хутчен тумалла. Лĕкĕ икĕ эрнере пĕтĕ.

● Хупахăн 3-4 типĕ тымарĕпе 2 апат кашăкĕ шĕпĕн курăкне вĕтетмелле те 1 литр вĕри шыва ярса пĕчĕк çулăм çинче çур сехет вĕретмелле. Сăрăхтармалла та çунă çӳçе чӳхемелле. Ку меслетпе пуçа кашни çумассерен лĕкĕ пĕтиччен усă курмалла.

● 5 литр ăшă шыва 2 чĕрĕ çăмарта сарри ямалла та пуçа çак хутăшпа 10-15 минут çумалла. Кайран пилеш курăкĕн шывĕпе 5 минут чӳхемелле Ăна хатĕрлеме 100 грамм пилеш курăкне 3 литр шыва ярса 10 минут вĕретмелле те çĕр каçармалла. Сăрăхтармалла, ăшăтмалла.

● Пуçа панулми ăшăтнă уксусĕпе сăтăрмалла та полиэтилен çатăркапа, алшăллипе чĕркесе сехет тытмалла.

● Пуçа 15 минутлăха йӳçнĕ сĕт сĕрмелле, унтан шампуньпе çумалла. Ку мелпе пĕр эрне куллен усă курмалла. Профилактика тĕлĕшĕпе – уйăхра пĕрре.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службы 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламӑсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8141. Заказ 919.